чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

162/26568/ № Юн кун, 2014, çурла (август), 20 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Михаил Игнатьев йĕркелӳ комитечĕн ларăвне хутшăннă

Шупашкар 2014

Çурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче Мускавра Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикинче 2014 çулхи юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумне хатĕрлесе ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн пĕрремĕш ларăвне тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен Канаш ларăвне хутшăннă.

Ларăва Раççей спорт министрĕ Виталий Мутко ертсе пынă. Йĕркелӳ комитечĕн членĕсене вăл форума ирттермелли вырăна Раççей Президенчĕ Владимир Путин суйласа илнине пĕлтернĕ.

«Тӳрех калас тетĕп – Президент ăнсăртран суйламан. Вăл çакна шута илнĕ – Чăваш Республикинче юлашки çулсенче физкультурăпа спорт лайăх аталанса пыраççĕ. Кунта пурлăхпа техника никĕсĕ çирĕпленет, физкультурăпа спорт занятийĕсем ирттерме условисем туса параççĕ, спортпа туслисен йышĕ ӳсет. Спорт резервне хатĕрлемелли тытăма çĕнетсе улăштарнă, ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсен пурлăх бази çирĕпленет, çĕр-шывăн наци пĕрлехи командисенче республика çыннисем йышлă. Чи кирли тата – республика юлашки çулсенче пысăк спорт форумĕсемпе турнирсем ирттерекен центр пулса тăчĕ. Çавăнпах Владимир Владимирович Путин «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума Шупашкарта ирттерме йышăннĕ», – палăртнă Виталий Мутко.

Вăл пĕлтернĕ тăрăх – форум лапамĕсенчи дискуссисен тĕп темисенчен пĕри спорт резервĕ хатĕрлесси пулĕ. «Чи аслă çитĕнӳсен спортĕнче эпир начар мар кăтартусемпе палăртăмăр. Çапах та вĕсене çирĕплетме спорт хатĕрленĕвĕн учрежденийĕсен тытăмне çĕнетсе улăштармалла», – тенĕ РФ спорт министрĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн сăмахĕнче палăртнă тăрăх – Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне Шупашкарта йышăнасси республикăшăн пысăк чыс тата яваплăх. Çавăнпа ЧР Министрсен Кабинечĕ, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, общество организацийĕсем, Шупашкарта пурăнакансем ĕçе хастар пуçаннă.

Спорт форумне тата Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен Канашĕн ларăвне хатĕрлесе ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн пĕрремĕш ларăвне ирттернĕ. Форума хутшăнакансене транспортпа тивĕçтермелли схема туса хатĕрленĕ. Вĕсене сывлăш тата чукун çул транспорчĕпе илсе килĕç. Аккредитациленĕ хăна çурчĕсен списокне палăртнă. Унта 43 хăна çурчĕ – 28 тĕп /2932 вырăн хатĕрленĕ/ тата саппас 15 çурт /хушма 500 вырăн/.

Форума хатĕрленсе культура программин концепцине йĕркеленĕ. Вăл форумăн тĕп лапамĕсенче мероприятисен сценарийĕсен никĕсĕ пулĕ. Ĕçлекен тата халĕ тăвакан спорт объекчĕсене, çав шутра Шупашкарти нумай функциллĕ, 7 пин вырăнлă универсал центрне /пăр аренăна/ кайса курассине йĕркелĕç. Форум мероприятийĕсенче 23 спорт объекчĕпе усă курасшăн.

«Шансах тăратăп: пĕтĕм тĕнчери ăмăртусем, тĕрлĕ йышши ĕçлĕ, культура форумĕсем ирттерсе пухнă опыт пире çĕр-шыв общественноçĕшĕн çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприятие чи çӳллĕ шайра ирттерме пулăшĕ», – тенĕ Михаил Игнатьев.

Ларура форум концепцийĕпе программине çирĕплетнĕ.

Форум вăхăтĕнче спортпа педагогика общественноçĕ валли пленарлă ларусем, ăслăлăх практика конференцийĕсем, фестивальсем, Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен спортри çитĕнĕвĕсен куравĕсене ирттерме, спорт объекчĕсене çитсе курма тата ытти мероприяти йĕркелеме палăртнă.

■ А.ЛЬВОВА

Сире полицире кĕтеççĕ

Раççей Федерацийĕн Шалти ĕçсен министерствин тĕп инспекторĕ Игорь Леонидович Романовский çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи çынсене ЧР Шалти ĕçсен министерствин йышăну пӳлĕмĕнче /Шупашкар хули, К.Маркс урамĕ, 41-мĕш çурт/ 11 сехетрен пуçласа тата çурлан 28-мĕшĕнче 10 сехетрен пуçласа Шевченко урамĕнчи 23 А çуртра йышăнать.

Йышăнава маларах – çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче те, 27-мĕшĕнче те – 8 сехетрен пуçласа 11 сехетчен – çырăнтараççĕ. Ыйтса пĕлмелли телефон: 24-13-52. Çумра паспорт е урăх документ пулмалла.

ЧР ШЕМ пресс-служби

Чăваш хĕвелĕ айĕнче çитĕннĕ çимĕç пахарах, тутлăрах

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕ

Пĕр-пĕр çимĕçе мĕн пĕчĕкрен хăнăхса çитĕннĕ çын ăна ĕмĕрĕпех юратса çиет, вăхăтлăха тăван енрен уйрăлсан – тунсăхлать. Яланлăхах куçса кайсан вара чăтайманран тата аса килсех тăнăран чăваш апатне хăй хатĕрлеме тытăнать.

Ялсенче хуран куклине юратакан нумай. Çĕпĕрте пурăнакан ывăлĕ тăван кĕтесе курма килсен амăшне çак çимĕçе ятарласа пĕçерттернĕ. «Ăна хатĕрлеме хам та пĕлетĕп-ха. Инçетре вĕрентĕм. Анчах вăл аннен чухлĕ тутлă пулмасть», – тенĕччĕ мана.

Маншăн вара хуппипе пĕçернĕ çĕр улмипе симĕс сухан тураса янă уйран, тăварланă хăяр е купăста пултăр. Яшкапа пăтта та кăмăллатăп паллах. Тĕп хулара 36 çул пурăнса та ытти апата ачалăхринчен ытла хăнăхаймастăп.

Яла кайсан хăшĕ-пĕри: «Хулара ăна хатĕрлеме çăмăл. Çатмапа 3-4 çăмарта ăшала та – пулчĕ те. Е лавккана тухса кĕр, вăл вара хăв пурăнакан çуртрах вырнаçнă», – тет. Килĕшместĕп çапла каланипе. Ăшаланă çăмартапа е лавкка çимĕçĕпе çеç пурăнмастăн вĕт. Ача чухне анне пĕçернĕ апат аса килетех, унсăрăн тăраннă пек туйăнмасть.

Мĕншĕн аса илтĕм-ха çаксене? Ют çĕр-шывсем Раççее хирĕç санкцисем йышăннăран ял хуçалăх продукцийĕ, апат-çимĕç, ытти хăш-пĕр тавара ют çĕртен кӳрсе килессине çулталăкламăр та. Куç тĕлне пулсан та чарăнсах тăмастпăр. «Банан – упăте апачĕ, вĕсемех çиччĕр», – тетпĕр шӳтлесе. Сĕтел çинче кăмакара хатĕрленĕ шарккупа хур тукмакки пулсан цитрус таврашĕ айккинче тăтăр. Вĕсемсĕрех çитĕннĕ эпир, малашне те пурăнма пултаратпăр. Çамрăк ăру хăнăхса ӳсрĕха, анчах хальхи ачасем те çăкăрпа çĕр улмине бананран ытларах юратаççĕ. Апла пулсан хăш-пĕр çĕр-шыв пире субтропик çимĕçĕсемпе тивĕçтерменшĕн питех хыпăнса ӳкме кирлех-ши?

Суту-илӳре лару-тăру еплерех-ха? Шăв-шава пула хаксене хăпартса яман-и, тавар калăпăшĕ чакман-и? Ыйтусене уçăмлатас тĕллевпе Шупашкарти темиçе лавккара пултăмăр, ял хуçалăх таварĕсен тĕп пасарне çитрĕмĕр.

Малашнехине пĕр турă çеç пĕлет теççĕ те, хальлĕхе пур çĕрте те йĕркеллех. Туянакансем хăйсене яланхи пекех лăпкă тытаççĕ. Хыпаланнине, пысăк черетсем йĕркеленнине асăрхамарăмăр. Кама мĕн кирлĕ – çавна туянать.

Чăваш Енри аш-какай комбиначĕсем кăларакан кăлпассине кунта пысăк вырăн уйăрнă. Предприяти ячĕсене курăнмалла çĕре çырса вырнаçтарнă.

Тĕп пасар вара вырăнти пахча çимĕçпе тулнă. Кĕр енне ял çынни ăна ытларах хатĕрлеме, сутма тытăннăран хакĕ кунсерен чакса пырать. Авăн уйăхĕнче хуласемпе район центрĕсенчи кашни пасартас «Кĕр мăнтăрĕ» курав-ярмăркка çуллеснех иртет. Кăçал вăл пысăк шайра пуласса шанас килет. Ун чухне тавар пушшех те йӳнелет: хĕл хырăмĕ аслă тенине асра тытса хула халăхĕ пахча çимĕç çителĕклĕ туянма, саппас хатĕрлеме пултартăр.

Çывăхри районсенчен /Шупашкар, Муркаш.../ çынсем ирех çитнĕ. Аш-пăш, услам çу, тăпăрч, çăмарта, пахча çимĕç тата темĕн те пĕр илсе килнĕ. Халăх кăмăлласах туянать.

Кăлпасси уйрăмĕнче черет çук, ассортимент пуян. «Мана Етĕрнери кăлпассине пĕр кило виçсе парăр-ха», – терĕ 30-35 çулсенчи хĕрарăм. «Ăна мĕншĕн кăмăллатăр-ха?» – кăсăклантăмăр. Хăйĕнпе паллаштарчĕ, Светлана ятлă. «Етĕрнери аш-какай комбиначĕ ют çĕр-шывран кӳнĕ чĕр таварпа мар, йăлтах вырăнтипе, хамăр патăртипе ĕçлени çинчен яла кайсан «Хыпарта» вуласа пĕлтĕм. Çавăнпа та малашне вĕсенне çеç туянасшăн. Ученчĕ вара мĕнле май килнĕ çавна илнĕ», – терĕ.

Чăваш Ен Правительстви уйрăмах пĕлтерĕшлĕ суту-илӳ сечĕсен лавккисенче хаксен улшăнăвĕпе кăсăклансах тăрать. ЧР Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерствинче ятарлă комисси йĕркеленĕ. Тивĕçлĕ органсен представителĕсемпе пĕрле суту-илӳ вырăнĕсене тухса çӳреççĕ.

«Агро-Инновацисем» ХУП та кашни эрнерех мониторинг ирттерет. Юлашки çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче пулнă. Икĕ эрне каяллахипе танлаштарсан та кăтартусен улшăнăвĕ пысăк мар иккен. Пĕрремĕш сортлă 1 литр сĕте утă уйăхĕн 31-мĕшĕнче 14,88 тенкĕпе туяннă, халĕ – 15,22. Ĕне какайне – 61 /62/; сысна ашне – 97 /улшăнман/ тенкĕпе. Çу 2,5 процентлă 1 литр сĕт вăтамран – 35,4, 1 кг услам çу 258,33 тенкĕпе сутăнать. Бройлер чăх ашĕ – 40 пус /109,3; 109,7/, чăх какайĕ – 2 тенкĕ /64; 66/ хакланнă. Пĕтĕмлетӳ çапларах: аш-какай тата унран хатĕрлекен тавар малашне хакланма пултарасси иккĕлентермест.

Пахча çимĕçĕн чи пĕчĕк хакĕ те паллă. Андриян Николаев космонавт урамĕнчи ял хуçалăх таварĕсен пасарĕнче 10 тенкĕпе – çĕр улми, 8 – купăста, 7 – хĕрлĕ кăшман, 14 – кишĕр, 13 – пуçлă сухан туянма пулать. Курав-ярмăркка вăхăтĕнче хак йӳнелсе çитет, кайран хăпарма тытăнать.

Ĕне вылькăран продукци илессине ӳстерме чылай çул кирлĕ. Çав вăхăтрах сысна тата кайăк-кĕшĕк ашне туса илме темиçе уйăх та çитет. Çавăнпа малашне çак отрасль çине ытларах пусăмламалла. ЧР Ял хуçалăх министерстви çирĕплетнĕ тăрăх – Чăваш Енре талăксерен аш туса илессине – 100 тонна, сĕт сăвассине 400 тонна ӳстерме майсем пур.

Республика чăх-чĕп ашĕ туса илессипе 1990 çул шайне çитнĕ, калăпăша хушăнтарма Шупашкар районĕнчи фабрикăсен хăватне вăйлатсан май килмеллех. 2014 çулхи кăрлачутă уйăхĕсенче Чăваш Ене тулашран кирлин 25% чухлĕ – какай, 30% çăмарта çеç кӳрсе килнĕ. Ыттине хамăрăннипе саплаштарнă. Шел те, пĕр пайĕ Мускава /е урăх региона/ каять. Тирпейлекен предприятисене туянаканпа укçа-тенкĕпе вăхăтра татăлса пултăр. Кам илет – уншăн çавах. Чăх ашне йăлтах хамăр патăмăрта хăварсан вăл пире çитмелле /кунта, паллах, суту-илӳ сечĕсен çаврăнăçуллăрах пулмалла/. Хамăрăн аш-какайран, пахча çимĕçрен хатĕрленĕ чăваш апатне мĕн çиттĕр ĕнтĕ? Унăн тути те лайăхрах, техĕмлĕрех те сĕтеклĕрех.

■ Валентин ГРИГОРЬЕВ

Сывлăх сыхлавĕ

Пĕрлехи вăйпа

Çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин ситуаци центрĕнче информаци хатĕрĕсен журналисчĕсем валли курав мелĕпе республикăри муниципалитет йĕркеленĕвĕсемпе çыхăнса ирттернĕ брифингра сӳтсе явнă тĕп ыйту – Чăваш Ен Пуçлăхĕн «Чăваш Республикинче пурăнакансен сывлăхне çирĕплетмелли тата пурнăç пахалăхне ӳстермелли хушма мерăсем çинчен» указне пурнăçа кĕртни.

ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕн пĕрремĕш çумĕ Татьяна Богданова гражданскен сывлăхне витĕм кӳрекен пулăмсем çинче чарăнса тăчĕ. Вăл палăртнă тăрăх – ку енĕпе медицина пĕлтерĕшĕ пысăках та мар.

«Сывлăх – пĕр пĕтĕмĕшле ăнлав. Ăна медицина тытăмĕ кăна мар, вăл пурăнакан хутлăх, пурнăç йĕрки, вĕренӳ шайĕ, çул-йĕр сийĕн пахалăхĕ, спорт сукмакĕ пурри-çукки тата ытти те витĕм кӳрет», – çапла шухăшлать Татьяна Богданова. Муниципалитетăн кашни йĕркеленĕвĕн çӳлерех асăннă указпа килĕшӳллĕн сывлăхăн профильне çирĕплетмелле, урăхла каласан хăйсен тăрăхĕн факторĕсемпе уйрăмлăхĕсене тĕплĕн тишкермелле, çынсен сывлăхне ырă тата ялăх витĕм кӳрекен сăлтавсене тупса палăртмалла. Çавна тĕпе хурса муниципалитет аталанăвĕн стратеги планне хатĕрлемелле. Унăн тĕп шăнăрĕ район-хулара демографи лару-тăрăвне лайăхлатассипе тата халăх йышне упрассипе, çавăн пекех çынсем вилессине чакарассипе, пурнăç пахалăхне ӳстерессипе çыхăнмалла.

Пĕтĕм тĕнчери сывлăх сыхлавĕн организацийĕн стратегийĕсемпе килĕшӳллĕн сывлăх профильне хатĕрленĕ чухне муниципалитет ĕçĕхĕлĕн вĕренӳ, культура, сывлăх сыхлавĕн, çут çанталăкпа усă курас, экологи, хула строительствин, юрăхлă хутлăх туса хурас, тирпей-илем кĕртес, территорие симĕслетес тата ытти тытăма пырса тивекен секторсен хушшинчи хаклава тĕпе хумалла. Татьяна Геннадьевна çакна уйрăммăн палăртрĕ: аталанăвăн стратеги планне тунă чухне халăх шухăш-кăмăлне шута илмелле.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин медицина реабилитацийĕ енĕпе ĕçлекен штатра тăман тĕп специалисчĕ Елена Наумова çирĕплетнĕ тăрăх – инфекциллĕ мар чир-чĕр – чĕрепе юн тымарĕсен, сахăр диабечĕн, сывлав, апат ирĕлтерекен органсен – сăлтавĕ сывă пурнăç йĕрки тытса пыманнинчен килнĕ пĕтĕм амакăн 70 проценчĕпе танлашать. Çĕнĕ указпа килĕшӳллĕн йĕркеленекен профилактика тытăмне медицина компонентне те /вăраха кайнă чирпе нушаланакансене диспансер мелĕпе тĕрĕслесе тăрĕç/, унпа çыхăнманнине те /сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси/ кĕртнĕ.

«Пирĕн гражданскен хăйсен сывлăхне хавшатакан сăлтавсем пирки тата ăна çирĕплетес тĕлĕшпе мĕн тумаллине пĕлмелле», – палăртрĕ Елена Наумова. Вăл брифинга пухăннисене кăçалхи çичĕ уйăхра ирттернĕ диспансеризаци пĕтĕмлетĕвĕпе паллаштарчĕ.

Шупашкар хула администрацийĕн социаллă ыйтусен пайĕн пуçлăхĕ Галина Васильева пĕлтернĕ тăрăх – кăçал Шупашкарăмăр пĕтĕм тĕнчери «Сывлăхлă хуласем» проекта хутшăнма тытăннăранпа 10 çул çитнине паллă тăвать. Вăл хăтлăхлă хутлăх йĕркелес, сусăрсене инфратытăм объекчĕсемпе усă курмашкăн май туса парас, халăх сывлăхне çирĕплетес енĕпе пысăк опыт пухнă. 2014 çулта та хула администрацийĕ сывлăха тĕреклетмелли малашлăх тĕллевĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе пĕлтерĕшлĕ мероприятисем туса ирттерчĕ. Общественноç çакна кĕçех тивĕçлипе хаклама пултарĕ.

Брифинга вĕçленĕ май ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕн çумĕ Любовь Шемарина халăх сывлăхне упрас тата пурнăçĕн пахалăхне ӳстерес енĕпе муниципалитетсенче ведомствăсен хушшинче йĕркеленĕ канашсен ĕçĕхĕлĕ пирки массăллă информаци хатĕрĕсем анлăн çутатасса шаннине пĕлтерчĕ. Пĕрлехи вăйпа кăна республикăри район-хулара çынсене хăйсен сывлăхне тĕреклетмелли мероприятисене пуçаруллă хутшăнтарма май килĕ.

■ С.ПЕТРОВА

КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

«Стрижсем» вĕçсе кайнă

Ĕнер «Стрижи» авиаци ушкăнĕ Шупашкарпа сыв пуллашса хăйĕн авиабазине çул тытнă. Летчиксем палăртнă тăрăх – вĕсем Чăваш Енĕн тĕп хулине питĕ килĕштернĕ.

Юлашкинчен вĕсем Шупашкарсене тĕпĕр хут тĕлĕнтернĕ: авиашоу вăхăтĕнче МИГ летчикĕ Павел Капустин хулан çуралнă кунĕ вăхăтĕнче хăйне евĕр сăн ӳкерчĕксем тунине никам та пĕлмен. Унăн объективне «Стрижсене» сăнакан 200 пин çын кĕнĕ. Çав самантра вăл 300 метр çӳллĕшĕнче вĕçнĕ.

«Хаклă Шупашкарсем! Тавах сире ăшшăн йышăннăшăн. Пире сирĕншĕн вĕçме питĕ килĕшрĕ. Эпир сире çӳлтен аванах куртăмăр!» – тенĕ сыв пуллашнă май 11 пилотпа 32 механик. «Эпир Шупашкар хулишĕн яланах вĕçме хатĕр!» – çапла илтĕннĕ «Стрижсен» «чипер юлăр!» тени.

Н.КОНДРАТЬЕВА.

Пуç хунă чикĕ хуралçисене манмаççĕ

Çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Йăлтăмра чикĕ хуралçисен Асăну юпине уçнă. Унта саппасри пограничниксем, Вăрнар поселокĕнчи, Шупашкар хулинчи çар организацийĕсен ĕçченĕсем хутшăннă.

Митинга Чăрăшкас Хирлеп шкулĕн директорĕ Ольга Ефремова ертсе пынă. Пухăннисене Açăмçырми ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Олег Петров, районти «Çар туслăхĕ» общество организацийĕн председателĕ Олег Никитин, пограничниксен çамрăк тусĕсен Вăрнарти штабĕн пуçлăхĕ Юрий Никифоров тата ыттисем саламланă. Чикĕ юпине уçма Олег Никитинпа Александр Ильин тивĕçнĕ. Унтан пуç хунă чикĕ хуралçисене асăнса пĕр минут шăп тăнă. Митинг хыççăн уяв концерчĕ пулнă. Александра Васильевăпа Анастасия Кондратьева, Светлана Семеновăпа Евгения Григорьева хăйсен илемлĕ юрри-кĕввипе куракана тыткăнланă.

А.ГРОМОВА.

Сăпасăн йăлт пур

Çурла уйăхĕ пахча çимĕçпе кăна мар, тĕрлĕ уявпа пуян. Христос тĕнне ĕненекенсем ĕнер иккĕмĕш Сăпаса паллă тунă. Çак ятпа республикăри чылай чиркӳре уяв кĕллисем иртнĕ, вĕсенче пан улмие сăвапланă. Ялсенчи вулавăшсенче те виçĕ Сăпаса халалласа тĕрлĕ мероприяти йĕркеленĕ.

Етĕрнери ача-пăча библиотекинче çак кунсенче «Сăпасăн йăлт пур» кĕнеке куравĕ уçăлнă. Унта Пыл, Пан улми, Мăйăр Сăпасĕсен историйĕпе йăли-йĕркине уçса паракан чун çимĕçĕсемпе паллашма пулать. Çав вăхăтрах выставкăра ваттисен сăмахĕсемпе каларăш та чылай. Сăмахран: «Пыл Сăпасĕнчен çава ăсат», «Сăпассем çитрĕç тĕк – апат-çимĕçе хĕлле валли хатĕрле» тата ытти те. Иккĕмĕш Сăпасра пан улми кукăлĕ пĕçересси йăлана кĕнĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕсем вара пан улмирен хĕлле валли варени, повидло, джем хатĕрлеççĕ. Уявра янтăланă апат-çимĕç уйрăмах сиплĕ, усăллăмĕн. Халăх сăнанă тăрăх – иккĕмĕш Сăпас хыççăн тăрнасем кăнтăра вĕçсе каяççĕ.

Р.ИВАНОВА.

Виктор Цоя асра тытса

Çĕнĕ Шупашкарти ачасен искусство шкулĕнче ачасемпе çамрăксене Виктор Цой тĕп рольте вылякан «Игла» илемлĕ фильм кăтартнă.

1990 çулта çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче рок-музыкантăн, «Кино» рок-ушкăн йĕркелӳçин, юрăсен авторĕн тата художникăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Мероприятие Çĕнĕ Шупашкар хула администрацийĕн пулăшăвĕпе «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн Çамрăк Гвардийĕ» организацин химиксен хулинчи уйрăмĕн членĕсемпе «Хула активĕ» çамрăксен юхăмĕн хастарĕсем йĕркеленĕ.

Унăн тĕп тĕллевĕ – хула çыннисене наркоманирен асăрханма хăнăхтарасси, çамрăк ăрăва наркотиксенчен пистересси, сывă пурнăç йĕркине тытса пыртарасси. Пухăннисем фильма, наркомани ыйтăвĕсене пĕрле сӳтсе явнă. «Сывлăха, пурнăça упрамаллах!» – пĕтĕмлетнĕ юлашкинчен яшкĕрĕмпе хĕр-упраç.

С.ВАСИЛЬЕВА.

Пыл уявĕнче савăннă

Муркашра «Пыл хурчĕ сывлăх парнелет» йăлана кĕнĕ уяв иртнĕ. Тĕп лапамра пыл тата хурт-хăмăрăн ытти продукцине сĕнекен ярмăркка уçăлнă. Районти утарçăсен хушшинче «Муркаш районĕнчи 2014 çулти чи лайăх пыл» конкурс йĕркеленĕ.

Муркашсене хăйне евĕр уявпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев саламланă. «Пыл уявĕ пире сывă пурнăç йĕркине пăхăнма хистет. Ахальтен-им пыла «турăсен апачĕ» теççĕ. Вăл сывлăхшăн чăннипех усăллă»,– тенĕ Ростислав Николаевич. Республикăри хурт-хăмăр енĕпе ĕçлекен агентствăн генеральнăй директорĕ Геннадий Максимов палăртнă тăрăх – ку çул утарçăсемшĕн уйрăмах ăнăçлă пулнă. Республикăра çурла уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне 1 пин тонна пыл илнĕ. Чăваш Енри кашни çын пуçне 350 грамм пыл тивĕçет. Культура ĕçченĕсем уяв тĕлне ятарлă курав та, «Çемье таланчĕсен асамат кĕперĕ» конкурс та йĕркеленĕ. Районти пултарулăх ушкăнĕсем хăйсен юрри-ташшипе савăнтарнă. Ачапчана вара «Пыл хурчĕн çĕр-шывĕ» вăйă лапамĕ пухнă. Вĕсем валли тĕрлĕ конкурс, вăйă, викторина хатĕрленĕ. «Муркаш районĕнчи 2014 çулти чи лайăх пыл» конкурсра Николай Кондратьев (Катькас ял тăрăхĕ) çĕнтернĕ. Вячеслав Михайловпа Виталий Ямангеев иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă.

С.РОЗОВА.

Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 24, çĕрле 16 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 48 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 46 минут.

Ыран уяр çанталăк пулать. Çил тухăçран 1 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 26, çĕрле 16 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 753 мм, сывлăшри нӳрĕк 42 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 42 минут.

Вырма-2014

Пучинке çăкăрĕ мĕншĕн тутлă?

● Ĕç шавĕ самантлăха та лăпланмасть.

Историе «Камай уйĕ» ятпа кĕрсе юлнă улăхран пăрăнса Пучинке сăрчĕпе тăвалла кăшт утрăмăр кăна – пирĕн ума куç ытамне кĕрейми тем тăршшĕ пусă тухса выртрĕ. Кăçал кунта «Красный партизан» колхоз ĕçченĕсем çурхи тулă çитĕнтернĕ-мĕн. Тухăçĕ чуна савăнтарать: тырă пиçнĕ вăхăтра ку тăрăхра çумăр пулман, çапах та кашни гектартан вăтамран 30 центнер ытла тухать. Эпир пынă чухне хирте 3 комбайн ĕçлетчĕ: 2 «Дон-1500» тата «Палессе-12». Хуçалăх ертӳçи Николай Иванов каланă тăрăх – 3 агрегата та лизингпа туяннă. Вĕсемшĕн татăлса пĕтнĕпе пĕрех. «Техника паркне çĕнетнĕ хыççăн айккинчен килсе пулăшасса кĕтме пăрахрăмăр, – тет Николай Михайлович. – Пĕлетĕр-и, çĕнĕ 3 комбайн кивелнĕ 10 «Нивăна» çăмăллăнах улăштарать. Вĕсен тухăçлăхĕ те пысăк. Пирĕн вырмаçăсем – Владислав Васильевпа Федор Шибаев тата Андрей Потапов – районти тупăшура малти вырăнсене тытса пыраççĕ. Ĕççие тухнăранпах вĕсемпе танлашаканнисем çук».

Пучинкесем хăйсем патĕнче вырма вĕçленĕ хыççăн кашни çулах ытти хуçалăха пулăшма каяççĕ. Пытарма кирлĕ мар: паянхи куна çитсе Йĕпреç тăрăхĕнчи «Рассвет» АУО кăна çавăн пек хăватлă техника пуррипе мухтанма пултарать. Шăпах çак икĕ предприяти механизаторĕсен хушшинче çивĕчленет те ăмăрту хĕрӳлĕхĕ. Пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн кашни хутĕнчех колхоз хастарĕсен кăтартăвĕсем пысăкрах пулни палла.

«Красный партизанра» кĕрхи культурăсене тахçанах пуçтарса илнĕ. Çуртри пуссенчи ĕç шавĕ те вăй илсех пырать. «Хир – йĕтем – ампар» конвейер тикĕссĕн шăвать. Уй-хир ĕçĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех механизмсен вăйĕпе пурнăçлаççĕ. Йĕтемре, хăш-пĕр çĕрти пек, кăшăлсенче тырă выртнине кураймăн. Зоя Петрова оператор çак кунсенче канăçне çухатсах тăрăшать: вăл комбайнсем патĕнчен килекен мĕн пур вăрлăха КЗС витĕр типĕтсе кăларать.

Кăçалхи тухăçшăн вăй-хал хурса ĕçленĕ хушăрах Пучинкесем çитес çулхи тыр-пул никĕсне те хываççĕ. Кĕр тыррисем 350 гектартан кая мар акса хăварма планланă. Куçакан фонд вăрлăхĕпе усă кураççĕ, çавăн пекех çĕнĕ сортсене те çул параççĕ. Хуçалăх республикăра вăрлăх туса илекен «Санары» агрофирмăпа тачă çыхăну тытать.

Пĕрремĕш Сăпас кунĕнче кунта районта чи малтан кĕрхи ыраш акма тухнă. Çак ĕçе Анатолий Николаев механизатора шаннă, лешĕ вара хăйне пулăшма ытти çул та акара тăрăшулăх кăтартнă Геннадий Семеновпа Анатолий Захаров ĕçченсене чĕннĕ. Иккĕшĕ те виçĕм çул кăна туяннă кăткăс сеялка вăрлăха тăпрана мĕнлерех варăнтарнине куç

● «Ку çăкăра кăçалхи тырăран пĕçертĕмĕр».

илмесĕр сăнаççĕ. Агрегат хыççăн шăйрăксем юлмаççĕ, хир талккăшĕпех çип çапнă пек тӳрĕ те тикĕс йĕрсем тăсăлса выртаççĕ.

«Хĕл хырăмĕ пысăк» тенине асра тытса районти чи пысăк колхозра выльăхсен хĕллехи рационне тĕрлĕ йышши апатпа пуянлатассишĕн те çине тăрсах ĕçлеççĕ. Утă пĕлтĕрхинчен чылай ытларах хатĕрленĕ, ăна яваплă çынна упрама шанса панă. Силоспа сенаж та çителĕклĕ чухлех пулать. Паянхи кун тĕлне кашни выльăх пуçне хывса хăварнă апат 24 центнерпа /апат единици çине куçарсан/ танлашать.

Хуçалăхăн куккурус уйне те çитсе куртăмăр. Вăл 70 гектар çинче. «Уй-хир пики» питĕ тухăçлă çитĕнет, малтанлăха шутласа палăртнă тăрăх кашни гектартан 800-900 центнертан кая мар тухма кирлĕ. Пучинкесем улăма та шута илсе пыраççĕ. Ăна тĕркемсем тунă хыççăн ферма çывăхне турттараççĕ. «Эпир улăма тутлăлантарса, концентратсемпе пуянлатса тата ытти апат хушса пăспа çемĕçтерме вĕренсе çитрĕмĕр, – палăртать Николай Иванов. – Пĕр килограмм апат та усăсăр тăккаланмасть пирĕн. Типтерлĕхпе перекетлĕх яланах тĕп вырăнта».

Тата мĕн асăрхарăмăр-ха Пучинке тăрăхĕнче? Ытти çĕрте механизаторсен кадрĕсем çитменни пирки ӳпкелешсе каласнине илтетĕн. Кунта ку енĕпе те пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Юлашки 2-3 çулта кăна техника паркне çамрăксем килнĕ. Вĕсенчен пĕри – Дария Александрова. Канаш районĕнчи Анат Вăрманялта çуралса ӳснĕ хĕр Пучинкене кавча киличчен механизатор профессине алла илнĕ те халĕ хăйне шанса панă «Беларуç» тракторпа çĕртме сухи тăвать. Мăшăрĕ Константин Александров – колхозăн тĕп агрономĕ. Çамрăк кинĕн ĕçĕ-хĕлĕпе ял-йыш кăмăллă.

Хĕвел кăнтăрла тĕлнелле вăйлăрах пĕçертме пуçларĕ. Колхоз столовăйĕн поварĕсем вырмаçăсем патне апат илсе килчĕç. Пурте пĕве хĕррине апатланма пуçтарăнчĕç. Колхоз ертӳçи Николай Иванов та вĕсемпе пĕрлех. Вăл Пучинке пекарнинче кăçалхи тырă çăнăхĕнчен пĕçернĕ çăкăра чĕллĕн-чĕллĕн касса турилкке çине хучĕ. «Пучинке çăкăрĕ пек тутли тек ăçта пур, – кăмăллăн сăмахларĕ ертӳçĕ. – Ăна туянма кӳршĕ ялсенчен те килеççĕ. Пĕлетĕр-и вăл мĕншĕн тутлине? Ара, çав çăкăра хамăр алăпа туса илетпĕр-çке. Унра çĕр çыннин тăварлă тарĕпе пĕрлех ирсерен чашлаттарса çунă лăпкă çумăр сипечĕ те таччăн пĕрлешнĕ. Çавăнпа тутлă та вăл – пирĕн çăкăр, Пучинке çăкăрĕ!..»

Николай Ивановăн чун-чĕререн тухнă сăмахĕсене кăнтăр çилĕ «Камай уйĕ» еннелле сапаларĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ.**

Йĕпреç районĕ.
Анатолий ФИЛИППОВ
сăн ӳкерчĕкĕсем

Çынсене мĕн пăшăрхантарать?

2014 çулхи çу уйăхĕн 21-мĕшĕнче Пĕрлехи информаци кунĕнче гражданнисенчен килнĕ ыйтусен хуравĕсем

Сĕт сутăн илмелли хак палăрмаллах – 1 литрĕ 12 тенке çити /24 тенкĕ пулнă/ чакрĕ. Çак ыйтăва Чăваш Республикин Правительствин шайĕнче татса пама, хаксем пĕчĕкленнине чарса лартмалли мерăсем йышăнма çук-и? А.Малышкин, Междуречье ял тăрăхĕ, Улатăр районĕ; Н.Мигушкин, Хĕрлĕ Чутай районĕ, Атнар сали; С.Иванова, Вăрмар районĕ, Тикаш ялĕ.

ЧР Ял хуçалăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Раççей Федерацийĕн саккунĕсем сĕтĕн сутăн илмелли хакĕсене патшалăх йĕркелессине пăхман. Ку хак рынокра продукцие мĕнлерех ыйтнине тата сĕннине кура йĕркеленет.

Ял хуçалăх продукчĕсем тата сĕт сутăн илмелли хаксем сезона кура улшăнаççĕ. Акă çуркуннехи-çуллахи тапхăрта производство калăпăшĕсем ӳснĕ май продукци кирлинчен ытларах сĕнеççĕ, çавна май хаксем чакаççĕ. Хĕллехи вăхăтра пачах урăхла – сĕт сахалрах суса илнипе хаксем ӳсеççĕ.

2013 тата 2014 çулсенче республикăри ял хуçалăх таварĕсем туса кăларакансемшĕн хаксем лайăх пулнă. Вĕсем маларахри çак тапхăртинчен 45-50% пысăкрах. Сĕт сутăн илмелли хаксем пысăкланнипе сĕт тата сĕт продукцийĕ курттăммăн сутмалли хаксем те ӳснĕ. Вĕсем иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 25-36% ӳснĕ. Сĕт тирпейлекен предприятисем сезона кура нарăс уйăхĕн иккĕмĕш çурринчен хаксене чакарнă. «Агро-Инноваци» предприяти пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Республикин сĕт тирпейлекен предприятийĕсенче 1-мĕш сортлă сивĕтнĕ сĕт сутăн илмелли хак /1 килограмшăн ака уйăхĕн 24-мĕшĕ тĕлне 19 тенкĕ те 68 пус пулнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 6 тенкĕ те 7 пус /е 44,6%/ пысăкрах.

Ака уйăхĕнче «Вăрнарти типĕтнĕ сĕт завочĕ» обществăра, «Фирма Акконд-Агро» акционерсен обществинче тата ытти çĕрте сĕт тата сĕт продукцийĕ курттăммăн сутмалли хаксене чакарнă.

Элĕк районĕнчи Мăн Шĕвĕш ялĕнче фельдшер-акушер пункчĕ тума ыйтатпăр, мĕншĕн тесен ял халăх йышĕпе чи пысăкки. П.Павлов, Чăваш Сурăм ял тăрăхĕн пуçлăхĕ, Элĕк районĕ.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Халăха пуçламăш медицинăпа санитари пулăшăвĕ парассине йĕркелемелли положенипе килĕшӳллĕн /ăна РФ Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин 2015 çулхи приказĕпе çирĕплетнĕ/ ФАПăн 300-700 çынна тивĕçтермелле /унта ачасем те кĕреççĕ/.

Мăн Шĕвĕш ялĕнчи халăха Чăваш Сурăмĕнчи çемье практикин уйрăмĕн тата Элĕк районĕнчи тĕп больницăн специалисчĕсем медицина пулăшăвĕ параççĕ. 3 ялти 387 çынна тивĕçтереççĕ.

Хальхи вăхăтра ЧР Пуçлăхĕн 2012 çулхи чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕнчи Указне пурнăçласа ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви муниципалитет районĕсен администрацийĕсемпе пĕрле 2014-2015 çулсенче модуль фельдшер-акушер пункчĕсем уçмалли плана тишкернĕ. Палăртнă тапхăрта Элĕк районĕнче 2 ФАП тăвасшăн: 2014 çулта – Мăн Ямашра, 2015 çулта – Яркуньушкăнь ялĕнче.

Патшалăх автоинспекцийĕн Куславкка районне тивĕçтерекен сотрудникĕсен штатне ӳстерме май çук-и? Куславккари автотранспорт предприятийĕн коллективĕ.

ЧР ШĔМĕн Патшалăх автоинспекцийĕн управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх – Шалти ĕçсен территори органĕсен йĕркелӳ-штат тытăмне Раççей ШĔМĕн ведомство приказĕсемпе регламентациленĕ. Хальхи вăхăтра республикăра Патшалăх автоинспекцийĕн подразделенийĕсен йышне улăштарма пăхман.

Елчĕк тата Нишер ялĕсем урлă Куславкка тата Сĕнтĕрвăрри районĕсене çыхăнтаракан хытă сийлĕ çул тума çук-и? Куславккари «Пчелка» ача сачĕн коллективĕ.

ЧР Транспорт министерстви пĕлтернĕ тăрăх – ЧР Патшалăх программипе /ЧР Министрсен Кабинечĕн 2014 çулхи ака уйăхĕн 8-мĕшĕнчи хушăвĕпе çирĕплетнĕ/ ЧР республика бюджетĕнчен çак автоçула тума укçа-тенкĕ уйăрассине пăхса хăварман.

Карайри вăтам пĕлӳ паракан шкулти ашшĕ-амăшĕн комитечĕ шкул автобусĕ туянмалли ыйтăва пăхса тухма сĕнет. Районта çак шкулта çеç автобус çук. Вăл ачасене Патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене, ăмăртусене, конкурссене, экскурсисене тата ытти çĕре илсе каяссине йĕркелеме кирлĕ. Р.Малинина, Красноармейски районĕнчи Карайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул директорĕ.

ЧР Вĕренӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Федерацин «Раççей Федерацийĕнчи вĕренӳ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн муниципалитетăн вĕренӳ организацийĕсенче шкул çулне çитменнисен тӳлевсĕр вĕренĕвне йĕркелесси муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен полномочийĕсен шутне кĕрет.

Çак саккунăн 40-мĕш статйипе килĕшӳллĕн муниципалитетсен администрацийĕсем патшалăх тата муниципалитет вĕренӳ учрежденийĕсенче вĕренекенсене ял тăрăхĕсен хушшинче илсе çӳрессине тивĕçтереççĕ.

Ачасене вĕреннĕ вырăна илсе çӳрессине йĕркелемешкĕн шкул автобусĕсене Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенкине туянаççĕ. Конкурссене, олимпиадăсене, спорт мероприятийĕсене çӳрессине йĕркелемешкĕн транспорт хатĕрне муниципалитет бюджечĕн укçипе туянма май пур.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чкалов урамĕнчи спирт завочĕн пулнă çуртсене юсама палăртаççĕ-и? «Спирт завочĕ» микрорайонта пурăнакансем, Сĕнтĕрвăрри хули.

ЧР Строительство министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕ панă информаципе килĕшӳллĕн Сĕнтĕрвăрри хулинчи Чкалов урамĕнчи нумай хваттерлĕ 55-мĕш тата 67-мĕш çуртсене 2006 çулта ведомствăсен хушшинчи комисси ишĕлме пултараканнисен шутне кĕртнĕ. Çак çуртсене республикăн «Граждансене ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси» программине пурнăçламалли пĕрремĕш тапхăра кĕртнĕ. Хальхи вăхăтра маларах илсе кăтартнă çуртсене юсаççĕ, объектсене 2014 çулхи çурла уйăхĕнче хута яма палăртнă.

Спирт завочĕн микрорайонĕнче вырнаçнă нумай хваттерлĕ ытти çурта республикăн нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсамалли вăрах вăхăтлăх программине кĕртнĕ.

Сĕнтĕрвăрри хулинче Курчатов урамĕнчи 7-мĕш а çурта 2014 çулта Ишĕлме пултаракан çуртран куçармалли программăна кĕртмелле пулнă. Пирĕн мĕн кĕтмелле? Калабашкин, Сĕнтĕрвăрри хули, Курчатов урамĕ, 7-мĕш а çурт.

ЧР Строительство министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Сĕнтĕрвăрри хулинчи Курчатов урамĕнчи нумай хваттерлĕ 7-мĕш а çурта республикăн «Граждансене Чăваш Республикинчи ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси» программин III тапхăрне кĕртнĕ. Ăна пурнăçламалли вăхăт – 2015-2016 çулсем.

Вăрмар районĕнчи Тикаш ялĕнче пысăк хăвăртлăхлă Интернет хăçан пулать? С.Иванова, Вăрмар районĕ, Тикаш ялĕ.

ЧР Информаци политикин министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Ростелеком акционерсен обществин Чăваш Республикинчи филиалĕ панă информаципе килĕшӳллĕн Вăрмар районĕнчи Тикаш ялĕнче xDSZ технологипе Интернет сетьне кĕмелли пулăшу ĕçĕсене 16 абонента, çав шутра Сире те, параççĕ. Интернет сетьне кĕмелли хăвăртлăха ӳстерме Тикаш ялĕнчи абонентсене 20,1 километр тăршшĕ çыхăну линийĕ /оптоволоконная линия/ кирлĕ.

Çыхăну пулăшу ĕçĕсем тĕлĕшпе халăх ыйтсах кайманнине, çак проект хаклă пулнине шута илсе 2014 çулта Ростелеком акционерсен обществин Чăваш Республикинчи филиалĕн инвестици планĕпе ăна пурнăçа кĕртессине палăртман. Хĕрлĕçыр ялне çити çыхăну линийĕ тунă чухне «Цифрăсем тĕлĕшĕнчен танмарлăха пĕтересси» проектпа ĕçленĕ май Тикаш ялне çити çыхăну линине тăвассине пăхса тухĕç.

Ачасен сывлăхне çирĕплетмелли лагерьсене вырăнти харпăрлăхран республикăнне куçарма палăртаççĕ-и? З.Петрова, Çĕрпӳ хули.

ЧР Пурлăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх – паянхи кун тĕлне ку тĕлĕшпе Чăваш Республикин муниципалитет районĕсемпе хула округĕсенчен сĕнӳсем пыман.

Чăваш Республикинчи хула тулашĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсен тытăмне упраса хăварас тĕллевпе ЧР Министрсен Кабинечĕн 2012 çулхи 70-мĕш хушăвĕпе Чăваш Республикин муниципалитет районĕсемпе хула округĕсен администрацийĕсене мĕн пур харпăрлăхри лагерьсен сетьне упраса хăварас тата анлăлатас енĕпе мерăсем йышăнма сĕннĕ.

Вăрман Çĕктер ял тăрăхне кĕрекен Варпуç ялĕнчи шывпа тивĕçтерекен тытăма тăвассине республикăн ĕçмелли таса шывпа тивĕçтермелли программине кĕртме пулать-и? Шупашкар районĕнчи Варпуç ялĕнче пурăнакансем.

ЧР Строительство министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Варпуç ялĕнчи шывпа тивĕçтермелли тытăмсене тăвассине Чăваш Республикин «Пурăнмалли çурт-йĕр строительствине тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферине аталантарасси» патшалăх программин çум программине кĕртме май пур.

Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенкине çум программăна пурнăçламашкăн ЧР Министрсен Кабинечĕн 2010 çулхи раштавăн 9-мĕшĕнчи хушăвĕнче пăхнă йĕркепе уйăраççĕ. Объекта республикăн Инвестици программине кĕртме район администрацийĕн ЧР Строительство министерствине çӳлерех асăннă хушупа палăртнă документсене тăратмалла.

Етĕрне районĕнчи Хучашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн спорт залне тĕпрен юсама «Ялти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен спорт залĕсене тĕпрен юсасси» программăпа укçа-тенкĕ уйăрма май пулать-и? М.Ефимова, Хучашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорĕ, Етĕрне районĕ.

ЧР Вĕренӳ министерстви пĕлтернĕ тăрăх – Федерацин «Раççей Федерацийĕнчи вĕренӳ çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн муниципалитетăн вĕренӳ организацийĕсен çурчĕсене пăхса тăрассине тивĕçтересси, вĕсен çумĕнчи территорисене тирпейлесси вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен полномочийĕсен шутне кĕрет.

Ялта вырнаçнă пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан организацисенче физкультурăпа спорт занятийĕсем ирттерме условисем туса памалли мероприятисене пурнăçласа 2014 çулта спорт залĕсене тĕпрен юсама пăхнă, организацисен списокне çирĕплетнĕ. Çак списока шкулсене муниципалитет районĕсен администрацийĕсем панă заявкăсем тăрăх кĕртнĕ.

Çурла уйăхĕн 31-мĕшĕччен "Хыпар"
Издательство çурчĕн хаçачĕсене
2015 çулăн I çурри валли республикăри почта
уйрăмĕсенче йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ.
«Хыпар» – 732-66 тенкĕ,
«Хыпар»-шăмат кун – 304-08 тенкĕ

Тĕп хуламăр ырлăхĕшĕн

● Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов «Южный» ООО тĕп бухгалтерне Анастасия Заверкинăна «Общество йышăнăвĕ-2014» преми парать.

Шупашкарăн 545 çулхи уявĕ умĕн тĕп хула администрацийĕнче «Общество йышăнăвĕ-2014» конкурс премийĕн çĕнтерӳçисене чыслана. «Ветерансем чунпа ватăлмаççĕ» номинацире Шупашкарти кооперацин институчĕн ветеранĕсен канашĕ тивĕçнĕ. «Южный» ООО «Тĕп хуламăрпа çыннисен ырлăхĕшĕн» номинацире иккĕмĕш вырăн йышăннă.

«Южный» пасар 50 çул ытла ĕçлет. Çав çулсенче вăл социаллă пĕлтерĕшне яланах тытса пынă. Кунта инвалидсене, вăрçă ветеранĕсене ял хуçалăх продукцине сутма вырăнпа, çăмăллăхпа тивĕçтереççĕ.

– Чăвашпотребсоюз Канашĕ пулăшнипе эпир юлашки çулсенче пурлăхпа техника базине самаях çĕнетрĕмĕр, – тет рынок директорĕ Александр Журавлев. – Суту-илӳ комплексне хута ятăмăр, павильонсене çĕнетрĕмĕр, территорине асфальт сартăмăр, хăнасен автомашинисене лартма вырăн хăтларăмăр. Продукци пахалăхне ятарлă лаборатори тĕрĕслет. Туянакансем тата сутуçăсем хальхи хăтлăхпа питĕ кăмăллă.

Усă курнă тавара та пасарта туянма май пур. Совет влаçĕ вăхăтĕнчи кивĕ ялаласене туянмашкăн коллекционерсем кӳршĕ регионсенчен те килеççĕ. Тупма çăмăл пултăр тесе тавара ушкăнласа ятарлă çĕре вырнаçтарнă.

Кану кунĕсенче туянакансен йышĕ 10 пине çитет. Вĕсем комбикорм, тĕрленĕ ялала е вырăн таврашĕ, пыл ăçта сутнине лайăх пĕлеççĕ. Хăйсене мĕн кирлине хăвăрт шыраса тупаççĕ.

Анчахрах Крым Республикин Потребобществин Тĕп канашĕн делегацийĕ хăнара пулчĕ. Вĕсене вырăн уйăрнинчен пуçласа хăтлăх епле кӳни таранах кăсăклантарчĕ.

– Эпир пĕтĕм территори тавра çаврăнтăмăр, – тет Александр Валерьевич. – Крым çыннисене йăлтах интересленнерчĕ. Тĕл пулура хăйсен ĕçĕпе те паллаштарчĕç. Çакă пирĕншĕн те, вĕсемшĕн те усăллă пулчĕ.

Потребкооперацин хăнăхнă йăлана пăхăнса ялта çеç мар, хулара та ĕçлет. Халăха паха таварпа тивĕçтерет, çав шутра хăй туса илнипе те, – тет Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ Валерий Павлов. – «Южный» пасар социаллă пĕлтерĕшне нихăçан та çухатман, юлашки çулсенче вăл палăрмаллах улшăнчĕ. Эпир çак шайран чакмастпăр. Чăвашпотребсоюз специалисчĕсем çĕнĕ суту-илӳ комплексĕн техника проектне хатĕрленĕ. Вăл тĕп хулан кăнтăр микрорайонне татах илемлетессе шанас килет.

■ **Н.АНТОНОВА**

Йыйту-хурав

ГЭСăн – çĕнĕ директор

Шупашкар гидроузелĕн ертӳçине улăштарнă теççĕ. Тилхепине кама тыттарнă?

В.ПЛЕТНЕВ.
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Совет тапхăрĕнче Красноярск крайĕн депутачĕсен Канашĕн председателĕ пулнă Вадим Бардюкова, пурнăçĕн пысăкрах пайне энергетикăпа çыхăнтарнăскере. Ивановăри В.И.Ленин ячĕллĕ энергетика институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн вăл Усть-Хантай ГЭСĕн электромонтерĕнчен цех пуçлăхне çити ӳснĕ. 1996 çултан – Курей ГЭСĕн тĕп инженерĕ, 1998-2006 çулсенче – директорĕ. «РусГидро» обществăн Эвенк тат Анат-Курей ГЭСĕсен проекчĕсене пурнăçланă, çакăнпа пĕрлех Анат-Курей ГЭСĕн генеральнăй директорĕ пулнă. Экономика ăслăлăхĕсен кандидачĕ. Шупашкар ГЭСне 2007 çултан ертсе пынă Владимир Дорофеева улăштарнă.

Кӳршĕсен укçа уйăрмалла

Канаш-Сергач /Чул хула облаçĕ/ маршрутпа пуйăс пассажирсене нумай çул турттарнă. Ăна пĕтерчĕç те çул çӳреме йывăрланчĕ. Каялла хăçан тавăрĕç?

Н.ПЕТРОВ.
Канаш хули.

РФ Транспорт министерствин 2010 çулхи 311-мĕш хушăвĕпе килĕшӳллĕн чукун çул транспортне темиçе регион территорийĕнчи хула таврашĕнче çӳретессине тупăш унта мĕн чухлĕ ĕçлесе илнине тĕпе хурса йĕркелеççĕ. Çавăнпа Канаш-Сергач маршрута тавăрассине Чул хула облаçĕ хыснаран укçа уйăрсан çеç татса пама пулать. Вăл хуласене пуйăс транспорчĕпе тивĕçтерекен «Содружество» тата Чул хула облаçĕн транспорт департаменчĕн килĕшĕвĕ вăйран тухнăранпа, 2013 çултанпа, хупăннă. Кăçал тăсман. Çавăнпа пуйăс Канашран Çĕмĕрлене çеç çитет. ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерстви Канашран Княжиха станцийĕ урлă Сергача пуйăс çӳретес тĕллевпе облаçăн транспорт департаментне çырупа тухнă. Анчах вăл Чул хула хыснинче укçа çителĕксĕртен çул çӳреве субсидилеме май килменнине пĕлтернĕ.

Хăшĕ çамрăкрах: Куславкка-и е Çĕнĕ Шупашкар-и?

Эпĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕренетĕп, общежитире пурăнатăп, аслă аппа вара – Çĕнĕ Шупашкарта. Инçе мар та – ун патне час-часах каятăп. Вăл çак хулана çур ĕмĕр ытларах çул каялла çеç тунине çирĕплетет.

Пĕррехинче Куславккаран Шупашкара вĕренме килнĕ Петĕрпе тавлашса кайрăмăр. Вăл хăй çитĕннĕ хулана ГЭС вырнаçнинчен каярах статус панă тет. «Хыпар», пулăшсамăр, хăшĕ çамрăкрах: Куславкка-и е Çĕнĕ Шупашкар-и?

В.КУЗНЕЦОВ.
Тăвай районĕ.

Ыйту чăнласах питĕ кăсăк. Çĕнĕ Шупашкара малтан Спутник тенĕ. ГЭС тăвакансене пурăнмашкăн çывăхра çуртсем кирлĕ пулнăран ăна 1960 çултах никĕсленĕ. Вăл халĕ 54 çулта. Республикăра вăл уйрăм çын пӳрчĕсемсĕр пĕртен-пĕр хула.

Куславкка кăçал çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче 343 çул тултарчĕ. Унăн кун-çулĕ 1671 çултанпа çырăнать. Икĕ сăрт хушшинче – илемлĕ вырăнта вырнаçнă. Пĕр шутласан – ватă темелле, анчах вăл хăй вăхăтĕнче ял та /1897 çулта 738 çын çеç пурăннă. – И.С.Дубановăн «Географические названия Чувашской Республики» кĕнекерен/, каярах поселок та шутланнăскер, хула статусне 1967 çулхи чӳкĕн 20-мĕшĕнче çеç илнĕ. Çавăнпа та Куславкка республикăри хуласенчен чи çамрăкки шутланать.

Шурă кĕпе

Альбина ЮРАТУ

Калав

– Анне, анне тетĕп, – шухăша кайнă Наçтука аллинчен карт туртрĕ пиллĕкри хĕрĕ. – Кур-ха, кур, мĕн тери хитре шурă кĕпе, чĕнтĕрлĕ-чĕнтĕрлĕ, виçĕ аркăллă. Эсĕ мана Çĕнĕ çул ячĕпе çĕнĕ кĕпе илсе паратăп терĕнçке, атя тăхăнса пăхатпăр... Эпĕ тахçанах çакăн пек капăр шурă кĕпе пирки ĕмĕтленсе пурнатăп.

Çĕнĕ çул умĕн парнесем туянма тесе Мега Мола ятарласа килнĕ Наçтук пĕчĕк хĕрĕн кăмăлне çырлах-тарас тесе кĕпесем çакăнса тăракан вырăна утса пычĕ, йăрхах çинче çакăнса тăракан капронран çĕленĕ шурă кĕпене аллине илчĕ, тумтирсем тăхăнса пăхмалли ятарлă пӳлĕме тĕпренчĕкĕпе пĕрле кĕчĕ. Шап-шурă кĕпе тăхăннă Елюк тĕкĕр умĕнче хăйпе хăй киленсе чарăнми çаврăнка-ласа-пăркаланса йăл та йăл кулнине курсан Наçтукăн та кăмăлĕ çĕкленчĕ, чунĕ хĕпĕртерĕ. Вăл самантлăха çеç куçне хупрĕ, унăн мĕн пур ачалăхĕ куçĕ умĕнчен хăвăртлăхпа малалла ыткăнакан пăравус пек чупса иртсе кайрĕ. Вăл ерипен куçне уçрĕ. Те чăнласах, те туйăнчĕ кăна-ши – тĕкĕрте вăл хăйне курчĕ. Шап-шурă кĕпе тăхăннă вун тăваттăри Наçтук тĕлĕнсе те савăнса вăтăр урлă каçнă Наçтук çине ытарлăн тĕмсĕлсе пăхать. Темĕн каласшăн пек. Тем аса илтересшĕн пек. Хăйне хăй ĕненмесĕр çамрăк хĕрарăм куçне темиçе хут мăчлат-тарса илчĕ, сăтăр-каласа та пăхрĕ, унтан каллех тĕкĕр çинелле тинкерчĕ. Çук, курăнчĕ анчах иккен. Наçтук пĕшкĕнчĕ те хавасла-лăн чĕвĕлтетекен хĕрне куç тулли-лин юратса пăхрĕ, ыталаса илчĕ. Хăй сисмесĕрех унăн куçĕнчен тăварлă куççуль тумламĕсем шăрçаланса юхса анчĕç.

– Анне, анне, мĕн пулчĕ, ан йĕр, ан йĕр тетĕп, атту эпĕ те санпа пĕрле йĕретĕп, – чĕвĕлтетрĕ сар кайăк сассипе Елюк. Пĕчĕк икĕ аллипе тăрăшсах амăшĕн куççульне шăлчĕ. Пĕчĕкскер амăшĕн питне кăпăшка тутипе ачашшăн чуп турĕ, аллипе пуçĕнчен ачашларĕ. Елюк мар пĕчĕк хĕр пĕрчи, Наçтук пĕчĕк ача тейĕн. Наçтук ĕçпе куштăр-канă аллипе хăйĕн пĕчĕк ылтăн чăмаккине хăй çумне тата та тачăрах çупăрларĕ, такам туртса илесрен хăранă пек, никама та парасшăн мар пек...Чĕринче йăшăлтатса илнĕ канăçсăр ырату тепĕр хут хăйĕн çинчен аса илтерчĕ, таçта тĕтре ăшĕнче пытаннăскер ерипен уçăмланса килчĕ те Наçтука ачалăха пуçĕпех туртса илсе кайрĕ.

...Аслă Ял варринче çулталăк каялла çеç кирпĕчрен купаласа хунă çĕнĕ лавккана вун тăваттăри Наçтук юлашки вăхăтра кун сиктерми тенĕ пек кĕме пуçларĕ. Сутăç та ăна курсан тӳрех йăл кулма пуçлать ав:

– Кĕрех, кĕрех, каллех хăв килĕштернĕ шурă кĕпӳне курма килтĕн-иха?

...Мускавран посылка килнĕ кун Аслă Ял лавккине çĕнĕ япаласем курма самаях халăх пухăнать, уйрăмах хĕрарăмсем пĕр лавкка кĕпĕрленсе шавлаççĕ. Хитре те паха япаласем çĕр-шыв тăрăх посылкăпа валеçесси тахçанах йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Çӳлтисем пурне те савăнтарас теççĕ-ши е такамăн ырă ĕçĕ-ши ку? Никам та ку ыйтăва хуравлаймĕ ял çыннисене. Апла-и, капла-и – посылка килнĕ кун ял халăхĕшĕн хăйне евĕрлĕ уяв пулса тăчĕ. Кам Китайра тунă пит шăллипе ал шăлли туянать, кам – Чехословакире ăсталанă шăрçана, кам – тĕнчипех чапа тухнă Югослави савăтсапине, кам – Индире çывăрмалли вырăн валли маçтăрланă минтер пичĕсемпе витĕкĕсене... Иртнĕ уйăхра, ав, Венгрире çĕленĕ шурă кĕпе чиксе янă. Питĕ капăрскер вăл, шурă пусма çине шурă пурçăн çиппе тем тĕрлĕ чечек те тĕрленĕ, çинçе пилĕке çат тытса тăрать. Ăна тăхăнсан вара юмахри пикене çаврăнăн, юмахран килнĕ шурă ăйăр утланнă принц сана хăй асамлăхне илсе кайĕ тейĕн. Куç илмелле мар, пăхса тăранмалла мар. Ун пек те, кун пек те çавăркаласа пăхрĕç шур кĕпене пуçĕсене хăмăр тутăр çыхнă, фуфайка тăхăннă хĕрарăмсем, анчах та никам та ăна туянасшăн пулмарĕ. Те хаклăран, те ытла та капăртан... Ара, ялта кун пек кĕпе тăхăнса ăçтаях каяйăн-ши питех? Çапла майпа никам туянма килĕшмен кĕпе йăрхах çине çакăнчĕ.

...Çав кун хĕрарăмсен хушшинче Наçтук та пурччĕ. Амăшĕ ăна посылка килсен яланах хăйпе пĕрле лавккана илсе каять. Пĕр-пĕр япала туянас умĕн унпа канашлать. Наçтук та шурă кĕпе çине киленсе пăхрĕ. Сутăç ăна кĕпене тăхăнса пăхма ыйтсан вăл турткалашса тăмарĕ, кĕпене алла илсе тавар купаланса выртакан склада кайрĕ. Шап-шур кĕпе тăхăнса тухнă Наçтука курсан хĕрарăмсем пурте тĕлĕннипе ахлатсах ячĕç. Чăн-чăн пирĕшти! Йăрăскер, кăн-кăвак кӳлĕ тĕсне пуçтарса куçне илнĕскер, йĕтĕн çӳçлĕскер. Ик çунатти пулнă пулсан халех çӳл тӳпене вĕçсе каймалла та. Пурте пĕр чарăнми ахлатрĕç, тĕлĕнчĕç те – çавăнпа пур ĕç вĕçленчĕ. Амăшĕ, Наçтук ун куçĕнчен темле йăлăнса тинкерсен те, шур кĕпене хĕрне илсе памарĕ. Ăçтан илсе патăр ĕнтĕ вăл Наçтука çак кĕпене? Пĕрре – ашшĕ ĕç укçи илмен, тепре – çичĕ ачаллă çемьере тепĕр чух сахăр илме те укçа çитмест. Кил-хуçалăхра сапламалли шăтăксем те тупăнсах тăраççĕ. Çĕнĕ мунча хăпартмалла, пӳрт тăрри шăтнă, çумăр анать ав, укçа пухса çава тухсан çĕнĕ шифер туянасшăн ашшĕ. Çитменнине – Наçтука та тин çеç çĕнĕ фуфайкăпа çĕнĕ çăм атă туянса пачĕç. Хальхинче лавккаран килне Наçтукпа амăшĕ пушă алăпах тавраннĕç.

Анчах та çав кунран пуçласа хĕр канăçне çухатрĕ, ун ăшне такам, темле хăват кĕрсе вырнаçрĕ тейĕн. Вăл тĕлĕкре те, урок вăхăтĕнче те лавккара йăрхах çинче çакăнса тăракан шурă кĕпепе аташрĕ. Хăйĕн тутлă тĕлĕкĕсенче вăл çав шап-шур кĕпене тăхăнса уçлăхра çăлтăрсен хушшинче вĕçсе çӳрерĕ, патша иртте-рекен бал-сенче палламан каччăсемпе вальс çаврăнчĕ, шурă çĕмĕртлĕ вăрман уçланкинче çилпе ăмăртмалла чупрĕ, вĕçĕ-хĕррисĕр кăн-кăвак тинĕс хĕрринче шурă-шурă кăпăклă хумсемпе вылярĕ. Урокра та вĕрентекене итлемерĕ вăл. Сад пахчинелле тухакан шкул чӳречисенчен аяккалла тинкерсе хăйне вуннăмĕш класра вĕренекен Микулай çумĕнче курчĕ. Яш кавча Наçтук пĕрре курсах килĕштерчĕ. Тăхăр класс хыççăн икĕ çул тĕнче касса çӳренĕ каччă вăтам пĕлӳ илес тĕллевпе тăван шкула вуннăмĕш класа тепĕр хут вĕренме килчĕ. Маттурлăхне тата ăсталăхне кура ăна вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче шкулти комсомол организацийĕн секретарьне суйласа лартрĕç. Наçтук вара класри комсомолецсене йĕркелесе пыраканни. Пĕрремĕш юрату туйăмĕсен авăрне çакланнă Наçтук Микулая курас тесе пин сăлтав тупса унпа тĕл пулу шырама пуçларĕ. Каччă вĕренекен класс çумĕнчи библиотекăна кашни кун тенĕ пек кĕнекесем улăштарма çӳрерĕ. Çавăн чухне чăваш литературине тата та ытларах юратса пăрахрĕ вăл. Паллă çыравçăсен кĕнекисенчи юрату саманчĕсем çинчен çырнă сыпăксене вуласа ăша хыврĕ. Микулпа куçа-куçăн тĕл пулсан вара пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таран вĕттĕн-вĕттĕн чĕтреме пуçлатчĕ. Пичĕ хĕрлĕ мăкăнь евĕр кĕренленсе-кĕренленсе хĕрелетчĕ, кăвар пекех пĕçертме пуçлатчĕ. Хăйĕн ĕмĕчĕсенче шап-шур кĕпе тăхăннă Наçтук Микул умĕне шур акăш пек шуса иртетчĕ... Çав кĕпене туянса ярсанах Микул чĕри чăтаймĕ, Тĕп касра пурăнакан Наçтука юратма пуçлĕ те вĕт. Анчах Наçтукăн чунĕнче мĕн пулса иртнине курмастчĕ çав Микул. Вăл хăйне пĕр класра вĕренекен Луизăна куç хывнăччĕ. Пĕр парта хушшинчех ларатчĕç хĕрпе каччă, уроксем хыççăн килелле те васкамасăр пĕрле утатчĕç вĕсем, шкул пĕтернĕ хыççăн ялти тăванĕсене пухса туй кĕрлеттерчĕç те пурăнма Çĕпĕре тухса кайрĕç.

...Лавккана кашни кун кĕрекен Наçтука хĕрарăм-сутăç та хăнăхса çитрĕ ĕнтĕ. Уроксем хыççăн ăна кĕтсех тăратчĕ тейĕн. Сентре çинчен пĕр-ик канфет илсе хăналатчĕ. Наçтука шеллетчĕ вăл, хĕр ĕмĕчĕ пурнăçланайманшăн пăшăрханатчĕ. Анчах та мĕн тăвайăн: сутăçăн хăйĕн те çемйи пысăк, хăй те килте тĕртнĕ кĕпепе çеç çӳрет, кĕпен хакне те чакарса параймасть вăл, унăн ун пек майсем çук. Наçтука сăмахпа лăплантаратчĕ хăй, ĕмĕтне çунатлантаратчĕ, шанчăка çухатмалла маррине ĕненте-ретчĕ. Шкул пурнăçĕ пирки ыйтса пĕлетчĕ, ялти хыпарсене каласа паратчĕ. Сутăç пĕлнĕ чухлĕ ял хыпарне кам пĕлтĕр ĕнтĕ. Кашни кĕрен-тухан мĕн те пулсан çĕннине каласа хăварать-çке: е хăй çинчен, е кӳрши-аршине сăмах-па шĕкĕлчесе илсе. Шурă кĕпе çулланă хĕрарăмпа хĕре çывăхлатсах ячĕ. Лавккара çакăнса тăракан шур кĕпене чылайччен пăхса тăратчĕ Наçтук. Сутăçран ирĕк ыйтса тăхăнса киленетчĕ, пусмана аллипе сăтăрса савăнатчĕ, кĕпе ăшшине туятчĕ. Чĕрĕ тейĕн çав кĕпене, унпа саспах калаçатчĕ. Пуçĕнче вара тем тĕрлĕ шухăш хуранри яшка пекех вĕретчĕ. Тен, хĕраснашшĕнчен укçа ыйтса пăхас? Анчах парĕ-ши вăл укçа? Ара, виç çул каялла лавккара хĕре килĕшнĕ пĕр пĕчĕк пукане-тетте илсе пама та укçине шеллерĕ те. Тен, университетра аслă пĕлӳ илекен аппăшĕ стипенди укçинчен кăштах катса парĕ. Çук пуль çав, ăна хăйне те укçи çитсе пыманнипе выçă ларасран ашшĕпе амăшĕ сумка тулли пахча çимĕç парса яраççĕ. Чул хулара пурăнакан тетĕшĕсене çыру çырма именчĕ хĕр. Таçта аякра тинĕс хĕрринче пурăнакан аппăшĕн хăйĕн пурнăç, ăна Наçтук ас тумасть те. Пĕррехинче шкултан таврăннă чух хирĕçле пурăнакан хреснамăшĕ патне те кĕрсе тухрĕ Наçтук. Хăйне шурă кĕпе килĕшни пирки чунне уçса каласрĕ. Анчах та пĕччен пурăнакан хĕрарăмăн та ытлашши укçа тупăнмарĕ. Чĕри ырăччĕ çав хреснамăшĕн. Вăл хăй хĕр чухне тăхăнса çӳренĕ хĕретнĕ пиртен çĕленĕ кĕпине арча тĕпĕнчен туртса кăларчĕ те Наçтука тыттарчĕ. Кĕпи хитреччĕ-ха ĕнтĕ унăн, чылай хушă тăхăнманни тӳрех курăнатчĕ, ытлашши кивелсех те кайманччĕ, анчах та Наçтука лешĕ, шап-шурри, ӳте ачашлаканни, пурçăн тутăр пек çăп-çăмăлли, лавккари кирлĕччĕ çав.

Çапла сисĕнмесĕрех çур çул та иртсе кайрĕ. Çуркунне çитрĕ, юр ирĕлчĕ, ял вĕçĕнчи çырма уçăлчĕ, пăр шыв-шурпа кĕрлесе юхса кайрĕ, пахчасем шап-шур чечеке ларчĕç, кайăксем ирĕн-каçăн илемлĕ юррисене шăрантарчĕç. Часах çулла пуçланĕ, шкул çулĕ те вĕçленĕ...

Телейсĕр çав кун ирех хĕвел шарлаттарса хĕртрĕ. Тĕрлĕ предметпа тӳрех виçĕ «пиллĕк» илчĕ вăл. Кăмăлĕ çĕкленӳллĕччĕ унăн. Тинех амăшне ӳкĕте кĕртрĕ-кĕртрех вăл. Шур кĕпеллĕ пулас тесе питĕ тăрăшса вĕренчĕ, вăл лайăх вĕренекенсен шутĕнче, тăххăрмĕш класа та пиллĕк паллăсемпе çеç вĕçлĕ. Килĕнче те кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕ, урай çăвасси, пӳрт-çурта тирпейлесси, каçсерен яшка пĕçересси, мунча хыççăн сивĕнеймен пĕчĕк пӳртре кунĕне япала çăвасси унăн тивĕçĕ пулса тăчĕ. Амăшне кунсерен ĕне сума та пулăшрĕ. Кĕпе илсе патăр тесе тем тума та хатĕрччĕ. Амăшĕн чĕри чăтаймарĕ, ирĕлчĕ. Ашшĕнчен пытарса пухнă укçана Наçтука пама пулчĕ. Уроксем хыççăн яланхилле хĕр пĕрчи лавккана кĕчĕ. Хальхинче сутăç ăна хавасла йăл кулăпа кĕтсе илмерĕ, хĕр çине шеллесе те тунсăхлăн тинкерчĕ. Ырă мара сиснĕ Наçтук тӳрех юратнă шап-шурă кĕпи çакăнса тăнă çĕре пăхрĕ. Йăрхах пуш-пушах. Хурланнипе куçĕ хуралса килчĕ, сывлăшĕ пӳлĕнчĕ, тути чĕтрерĕ, хăлхисем питĕрĕнсе ларчĕç, тĕнче пĕр самантрах сассăр пулса тăчĕ, ик куçĕнчен вĕри те тăварлă куççуль шăпăртатса анчĕ. Пĕтĕм кĕлеткипе силленсех йĕрсе ячĕ Наçтук. Кӳреннипе тата тарăхнипе... Пырĕ тĕпĕнче капланнă муклашка чарнипе çеç ӳлесе яраймарĕ вăл. Чылайччен лăпланаймарĕ вăл. Сутăç тусĕ ăна лăплантарас тесе калакан ăшă сăмахсене те илтмерĕ. Йĕчĕ те йĕчĕ. Куçĕнчи мĕн пур куççулĕ типсен çеç кăштах лăпланчĕ, сутăçăн сăмахĕсене илтекен пулчĕ. Шап-шурă кĕпене çӳлти касра пурăнакан фельдшер аслă хĕрне çуралнă кунпа илсе парнеленĕ иккен. Хăйĕнчен пĕр çул кĕçĕнрех пулсан та пĕвĕпе Наçтука хăваласа çитнĕ Нинана паян шкулта курнăччĕ вăл. Лешĕ хĕвел пекех ялтăраса çӳретчĕ. Таçтан тӳперен ун пуçĕ çине ылтăн чăмакки йăтăнса аннă тейĕн, ăна курсан та йăл-йăл кулса иртсе кайрĕ. Ара, пысăк тăхтавра буфетра курсан Наçтук çине чеен пăхса илмерĕ-и-ха вăл?

Хĕр сутăça пĕр сăмах каламасăрах, сыв пуллашмасăрах лавкка алăкне уçрĕ те килнелле тухса утрĕ. Ун пуçĕнче пин шухăш пĕр çĕре пухăннă курак кĕтвĕ пекех чанкăлтатрĕ. Хăйне чи телейсĕр çын пекех туйрĕ вăл, пурăнасси те килмерĕ унăн, савăнасси те, пĕтĕм тĕнче хуралса ларнăн туйăнчĕ. Ури те ураран иртмерĕ, пуçĕ те çаврăнчĕ, килне аран утса çитрĕ. Минренĕ пуçĕ мĕн тăвассине пĕлменрен урисем сарай патне илсе çитерчĕç ăна. Алăка уçса кĕчĕ, яланхилле ешчĕк çинче выртакан вĕрене алла илчĕ, каштаран çакма хăтланчĕ. Те аллисем чĕтренипе, те кашта çӳлерех пулнипе ниепле те вĕрене кашта урлă яраймарĕ. Усал шăхăшсем ăна пуçĕпех ярса илчĕç тейĕн. Мĕн туса пурăнатăн, вил пĕрех хут – çинеçинех хистерĕç ăна усалсем. Ак, çакăнса вилĕн те сана ун чух пурте шеллĕç, аннӳ те хăйне айăплă туйса çӳрĕ. Сана шап-шурă кĕпе тăхăнтартса тупăка хурĕç. Пĕтĕм ял сан тавра пухăнса сана шеллесе йĕрĕ. Пĕр класра вĕренекенсем ыр сăмахсемпе аса илĕç, вил тăпру çине чечек кăшăлĕсемпе çыххисем хурĕç. Атя, çакăн, çакăн, çитет нăйкăшса ларса, вил, вил, вил... Те çил-тăвăл ахăрчĕ ун пуçĕнче, те çил-тăман урчĕ, те шыв сикки кĕрлерĕ, те тарăн авăр сасси хăй патне туртрĕ – вăл хăй те ăнланмарĕ. Минренĕ пуçпа тата тĕтреллĕ куçпа йĕри-тавраналла тинкерчĕ. Ун куçĕ умĕнчех хӳреллĕ шуйттансем сикеççĕ, çăмламас хăйсем, качака чĕрниллĕ урисемпе тапăртатаççĕ, хăйсемпе пĕрле чĕнеççĕ... Ăçта лекрĕ-ши Наçтук? Тен, вăл тамăкра? Ав, хуран айĕнчи кăвайтри вутă та шартлата-шартлата çунать, тавраналла хĕм сапать. Çав самантрах Наçтук куçĕ умĕнчех шап-шурă сĕт тĕслĕ çутă йăлт туса илчĕ. Пуçĕнче асламăшĕн сасси илтĕнсе кайрĕ: «Мĕн тăватăн эсĕ, мăнукăм! Сана кунта килме иртерехха, санăн кавча тухмалла, пĕчĕк хĕр пĕрчине пурнăç памалла, пирĕн ăрава малалла тăсмалла. Сана юратса ӳстертĕмĕр вĕт, санăн та ăна юратса ӳстермелле. Чăн чăваш йăли-йĕркине ăсна хыврăмăр, тăван чĕлхен илемне чĕрӳне кĕртрĕмĕр. Санăн çĕр çинче тумалли ĕçӳсен шучĕ те çук... Эсĕ кунта вăхăтсăр килсен миçе ăрăвăн пурнăçне татăн. Хăйсен ӳтне тупайман чунсене кам йышăнĕ çĕр çинче, вĕсен ĕçне кам тăвĕ? Пиртен те, аçупа аннӳрен те, пĕр тăванусенчен каçару пулмĕ сана!!! Эсĕ хăвăн вилĕмӳпе вĕсене хуçса амантса хăварăн, пурнăç тĕллевне путлантарăн, куçĕсене тĕтрепе карăн, чĕрисене çурмалла çурăн, чунĕсене асаплантарăн. Аслаçу та, аçу та тăшмансемпе çапăçса вăрçăран чĕрĕ таврăннă. Пурăнасчĕ-ха тесе куллен Турра кĕлĕ тунă. Эсĕ вара кунта хӳхлесе ларатăн. Сан пеккисем пурăнччăр, телейлĕ пулччăр тесе миçе пин çын пуçне хунă. Эсĕ мĕскĕн те мар, телейсĕр те мар. Сан пурнăçунта шап-шур кĕпе пĕрре мар пулĕ-ха тата. Хăв ĕçлесе илсе тăхăнăн. Атя, тăр, пурăн, санăн пурăнмаллах».

Йĕре-йĕре шăнса ĕнтĕркенĕ Наçтука такам ăшă тутăрпа витрĕ тейĕн. Çав такам ăна пуçĕнчен шăлчĕ, хул пуççисене сĕртĕнчĕ, питне çулларĕ. Хăйне çупăрланă ăшша пула чунĕпе асапланса çитнĕ Наçтук алăри вĕренĕпех тĕлĕрсе кайрĕ. Ыйхи тулнипе вăраннă Наçтук хăй çумĕнче выртакан çăмламас Кампура курсан савăнсах кайрĕ. Лешĕ ун çумне тĕршĕннĕ те хĕре ăшăтса выртать. Çурма уçă алăкран, Кампурĕ уçса хăварнă ĕнтĕ ăна, урамра тĕттĕмленнине асăрхарĕ хĕр. Чылаях çывăрнă иккен. Тата ăна никам та шыраманни савăнтарчĕ. Юрать амăшĕ сарайне тухса пăхман, атту мĕн шухăшлĕччĕ-ши? Наçтук улăм купи çинчен тăчĕ, тумтирне аллипе шаккаса тасатрĕ, Кампура пуçĕнчен ачашласа илчĕ, вĕрене каялла ешчĕке хучĕ.

– Анне, анне, тăр, тăр! – тесе чĕнекен ачи сасси Наçтука шухăш тӳпинчен çĕр çине илсе тавăрчĕ. Мăйĕнчен ыталанă Елюка тепĕр хут ачашшăн чуп турĕ те хĕрарăм шап-шурă кĕпене хывма пулăшрĕ. Тумтир тăхăнса пăхмалли пӳлĕмрен тухса хĕрĕпе касса патне пычĕ. Сумкине уçса хут укçа кăларчĕ те кĕпешĕн тӳлерĕ. Сутăç шап-шур капрон кĕпене илемлĕ çатăркапа чĕркесе Наçтука тыттарчĕ. Хĕрарăмпа пĕчĕк хĕрача пăчă сывлăшран сивĕ урама тухрĕç. Хула машина сассипе кĕрлесе çеç тăрать. Пурте таçта васкаççĕ, хавасланăн темĕн калаçаççĕ, ахăлтатса кулаççĕ.

Шавлать Шупашкар, кĕрлет Шупашкар, янрать Шупашкар, кăвак-симĕс-хĕрлĕ пин-пин çутăпа ялтăрать тĕп хула, Çĕнĕ çула кĕтсе илме хатĕрленет. Пĕр пĕлĕтсĕр тӳпере вара пин-пин çăлтăр йăлтăртатать. Пĕр ялтăр çăлтăрĕ тĕнче уçлăхĕнчен кусса-кусса килчĕ те Наçтука чеен куç хĕссе тӳпере пач сӳнчĕ. Сӳннĕ çăлтăр асламăшĕн чунĕ пулса хăйне сывлăх суннăнах туйăнчĕ Наçтука.

– Тавах сана, асанне! Пурăнатăпха... – сасăпах тав турĕ Наçтук хăйне вилĕмрен упраса хăварнă çывăх çыннине. Пĕчĕк Елюк амăшĕ çине нимĕн ăнланмасăр чар! тĕлĕнсе пăхса илчĕ. Наçтук пĕчĕк хĕрне ялтăркка чĕркеве аллинчен тытарчĕ те савăнăçлăн та телейлĕн сасăпах кулса ячĕ.

Геннадий ЮМАРТ

Атăл паттăр

Уралпа Карпат хушши
Хуçаланнă хун патши.
«Аслă» ята илнĕскер,
Пулнă ăслă та тискер.
Вăл чĕтретнĕ тĕнчене
Кăтартса хунсен вăйне:
Анăç, эс ăнланнă пул,
Тухăçпа тăванлă пул.
Вăрăсен вăрри çеç мар,
Хун юртса çӳрет вăр-вар.
Çапăçмашкăн та ăста,
Çураçмашкăн та ăста.
Юрламалăх юрă пур,
Юратмалăх хĕр те пур.
Хăратса тăрать-и Рим –
Чим, хун çарĕ халсăр-им?
Хун патши вун-вун йăха
Пĕрлештернĕ пĕр çыхха.
Çыхнăскер каярлăхпа,
Хайхискер каярахпа
Арканать-мĕн харкашса,
Сапаланать арпашса.
Асаттесем ун чухне
Лекнĕ Атăл аллине.
Тухăç енĕшĕн хурал
Пулнă шанчăклă кăрал.
Каталон тӳремĕччен
Тивнĕ çӳреме вĕсен.
Хурăнташĕ кăна мар,
Хуннĕш Атăлшăн пăлхар.
Ывăл-хĕр çитĕнтерсе
Кайнă йăхĕ ĕрчесе...
Çапларах хыпар-хăнар.
Çавăнпа та асăнар
Çак мухтавлă паттăра
Асăнмалăх вăхăтра.
Кунĕ-çулĕ несĕлсен
Уçăлать шăп çак тĕлтен.
Пин те пилĕк çĕн çулсем
Ĕлĕк пулнă çак ĕçсем.

Хĕркке

Кам пĕлмест Аттила текене!
Çак тĕнче хĕсмечĕн
чăрсăр куçĕ
Ăшшăн пăхнă тет Хĕркке
çине, –
Тен, пăлхаршăн чунĕ
пулнă уçă.
Пулăшнах пике тăван йăха
Пурнăçра тĕрекленсе
пымашкăн.
Ячĕ юлчĕ ун яланлăха,
Халĕ те вăл ырă ят хумашкăн.

Пăлхарпа Аттила хурăнташ,
Тапнă-мĕн унра пăлхарăн юнĕ.
Кирлĕ чух каласнă вăл айташ,
Кирлĕ чух – кăра
пăлхавлă чунĕ.

Пăлхартан çуралнă сар хĕре
Юратса çураçнă та чысланă.
Пурăннă Хĕркке мĕр хисепре,
Императорăн пики шутланнă.

Атăл паттăр инçетре чухне
Элчĕсем те йышăннă
Хĕркке мĕр.
Темиçе ача та тĕнчене
Парнеленĕ имĕш çак пикемĕр.

Ăсĕ, пуçарулăхĕ пуртан
Канашланă унпала çар пуçĕ.
Илнĕ-çке савса хĕр маттуртан,
Тупнă вăл унра вăй-хал
çăл куçĕ.

Пипарс

Пипарс мучи, яту сан юлнă
Раççей кун-çулĕн çырринче.
Хăвна кура эс паттăр пулнă
Тахçан Чăвашăн çĕрĕнче.

Тăван ялна та çавăнпа-тăр
Ят хунă сан ятупала.
Сана асра тытсах-çке «Паттăр»
Тесе калатпăр çав яла.

«Пипарс» тени пачах путлантăр
Тесе хушсан та мăн хуçа,
Чăваш манмашкăн шутламан-тăр
Хăюллă, тайăлман пуçа.

Малтан пуçтарăнтăн та йышлăн
Хусан хуçисенчен тарса,
Эс Мускавра пуç тайрăн чыслăн
Иван патша умне тăрса.

Кайран лару-тăру пăтравĕ
Хускатрĕ урăх шухăша.
Хӳтте илсессĕн те Мускавĕ,
Тем хăрататчĕ чăваша.

Пĕри тарасшăн харпăр хальлĕн,
Тепри пурнасшăн çармăспа.
Ыр тус пек ханăн та – Шăхалĕн
Пулмарĕ савнăçлă шăпа.

Пăлхавçăсен йышне çаклантăн,
Çавах пĕтерчĕ сан пуçна.
Анчах та эсĕ нихăçан та
Манман çуратнă халăхна.

Хуйхи-суйхи шав асăнтаччĕ,
Эс шутламан чунна сутма.
Яту хистенĕн туйăнатчĕ
Барс евĕр паттăррăн тăма.

Пĕтев пек хаклă пулнă
саншăн
Асаттесем пуç çапнă барс.
Пĕр уншăнах паян эс маншăн
Мухтавлă, паттăр çын, Пипарс.

Ман барс тирне
пĕркеннĕ паттăр
Пулас килсе каять хăш чух.
Тир татăкне çакма та хатĕр,
Анчах вăр-вар тупмашкăн çук.

Ун вырăнне ытах, туссемĕр,
Хай Ункă хĕрринчи яла
Çул майăн та пулин çитсемĕр
Пипарс çĕрне пуç таймалла.

Николай Шелепи

Шелепи – «Чăваш Гомерĕ»
Терĕç сумлă сăвăçа.
Вăл чăнах та тӳсеймерĕ
Пирĕн иртнĕ пурнăçа
Тимлĕн, анлăн сăнламашкăн.
Тан тапан хăвачĕпе
Килнĕ вăл сăвăламашкăн,
Пысăк çын вăл – ĕçĕпе.
Хамăр халăхăн авалĕ,
Тĕрлĕрен йăла-пăла,
ĕмĕрхи чăваш ăс-халĕ
Туслă пулнă унпала.
Чаплă Валĕм çул çӳревçĕ,
Стамбула никĕслени,
Е Пӳлерĕн вут кĕрлевĕ –
Ак мĕн-мĕн çинчен илтни
Шăкăл-шăкăл кĕвĕленчĕ
Ун чылай халапĕнче.
Пирĕн кăмăл хĕвелленчĕ
Ун юмарт сăмахĕнче.
Чӳк, ниме, Çĕрпӳ пасарĕ –
Хамăр сăн кӳрет пире,
Е сар кайăкăн сăнарĕ
Систерет çеçен хире.
Çĕр те çитмĕл çичĕ юрă,
Ахăр, пĕлнĕ Шелепи.
Вăл пире мăнаçлă турĕ,
Ун сăвви – чăваш шăпи.
Сăвăлла халап калаççĕ
Сесенпе ахун, ашук.
Шелепимĕр пек халапçа
Чăвашсенĕн урăх çук.
Туйăнать вуланă майăн
Пирĕн ĕлĕк-тахçанах.
Çакăн пек ăста нумайăн
Сасă панă уççăнах.

Илем тĕпчевçи

А.Трофимова

Юратнă халăхăн авалĕ
Халапсенче курнатчĕ ытларах.
Чĕррĕнтерех çĕкленчĕ халĕ,
Çакна кăтартрăн эсĕ вăйлăрах.

Пĕрре çеç мар, пĕр вăтăр ĕмĕр
Тарăнăшне пулать пăхса тухма.
Ĕне чăмланă кĕнекемĕр
Пуçларĕ хăйĕн пурнăçне
тăсма.

Ун тупсăмне тупса пĕлтертĕн
Шĕкĕлчесе пин-пин
эреш-тĕрре.
Никам та çĕклеймен
çак тертĕн
Виçи, чăнах та, пысăк хисепре.

Эреш çеç мар чăваш эрешĕ,
Асаттесен ăс-хакălĕн арчи.
Вăл аслă турăпа пĕрлешĕ,
Вăл пулнă йывăр пурнăç
тыткăчи.

Тухья çинче тӳпе куратпăр,
Вун сăнарне куран
масмак çинче.
Хĕвелĕн пиллине тупатпăр
Е кĕскĕре, е вĕт хĕрессенче.

Авал асаттесем тӳкленĕ
Кун-çул пилленĕ
пурнăç амăшне.
Ăна ӳкернĕ, хӳтĕленнĕ
Чунра туйса хĕвел асамлăхне.

Аса килет Вăта çĕр Ази,
Таçта курнать шур юрлă
ту тăрри.
Килсе тухас пек Арамаçи –
Асаттесен тӳр кăмăллă турри.

Çак тĕнчене çеç мар,
ĕçтешĕм,
Эс уçрăн канăçна çухатнăçем.
Хальхи çынсем патне
çитесшĕн
Хускалчĕç турăсен
кĕлеткисем.

Сан вăюпах Пӳлер юлташĕ
Паян çĕнелнĕ пурнăç туянать:
Сас пачĕ Меречен хулашĕ,
Янрать мăнаçлăн манăç
пулнă ят.

Чĕнтĕрленет хула кĕперĕ,
Хĕрсем каллех пикенчĕç
тĕрлеме.
Сан сăмахна чăваш тимлерĕ,
Сан ĕçӳнтен вĕренчĕ илеме.

Паянхипе пĕрле аваллăх
Çапла пымашкăн тивĕç
сыпăнса.
Хавшамасассăн ыр хаваллăх,
Яту та юлĕ санăн çырăнса.

Тантăшăма-аташăма

Хурланмасăр тăрăн-и,
тăванăм,
Тивĕçлĕ чыса тивĕçтерен.
Курăнан-тăр паян кун
айванăн,
Сан чапу çĕкленĕ ӳлĕмрен.

Эсĕ хунă пархатарлă юрă,
Манăçмĕ чăвашăн çӳпçинче.
Вăхăт çитĕ – халăхăм хак хурĕ,
Ĕнчĕ пек çуталăн йыш çинче.

Яшлăх ĕмĕтне йӳне хумарăн,
Эс манса каймарăн тивĕçе:
Пытанмарăн, пăрăнса тăмарăн,
Шав явăплăн парăнтăн ĕçе.

Тĕнчери пăтравлă тимсĕр
кăмăл
Ан хуçса хăвартăрччĕ пире.
Пулмасан та сывламашкăн
çăмăл
Чун сасси шăрантăр çеç хитре.

Сансăр чухăн хамăрăн поэзи,
Эсĕ маншăн ытарми виçе.
Аптраса ӳкместĕнччĕ-ха эсĕ
Хурапа шурра виçе-виçе.

Санăн сассунта – ăсчах
ăс-халĕ,
Сан пĕр сăмаху та пушă мар.
Çирĕплĕх сана çитиннчĕ халĕ,
Тет чунтан пăшăрханса Юмарт.

Михаил ЛЕРМОНТОВ

Парăс

Ăçта васкать пĕччен шур парăс
Кăвак тĕтреллĕ тинĕсре?
Ют çĕрсенче вăл мĕн шырарĕ?
Вăл ма пăрахрĕ çак çĕре?

Çил шăхăрать, хумсем –
чарусăр,
Ак шатăрт! авăнать юпа[1].
Телей те шырамасть вăл уссăр,
Телейĕ те хăйпех чупать.

Ун айĕнче – çут юхăм çулĕ,
Сар кун – ун ылтăн тӳпинче.
Вăл тăвăлпа çеç çураçуллăн
Тупасшăн канăçлă тĕнче.

Николай ТЕВЕТКЕЛ куçарнă.

––––––––

[1]Юпа – мачтă.

Платон ОЙУНСКИЙ, якут поэчĕ

Юратнă Хĕветлеме

Тӳпере кĕмĕлккен
Шуралса вĕçекен
Тăрнапа, Хĕветлем,
Танлаштарăп епле.
Эс унран та таси,
Эсĕ – юррăм сасси!

Çăлтăрсем çутипе
Каç илемлĕ тӳпе.
Куçусем çăлтăр пек
Йăлтăркка, Хĕвелем,
Куçхарши айĕнче
Çуталать мĕн ирччен.

Ачашлап çивĕтне,
Çурăму сийĕпе
Шыв майлах вăл юхать –
Хура хум ялтăркка!
Тĕнчере хам валли
Тупас çук сан майли.

Икĕ пит юнашар –
Пиçсе çитнĕ ик нар.
Пурçăнран та яка,
Чечекрен те паха.
Йăл кулан, хĕр

Сиплевçё

Кăмăл пусăрăнсан

Кăмăл пусăрăнни /депресси/ – чунри пушăлăх, пурнăçпа кăсăкланма пăрахни, ывăнса çитни, ыйхă çётни е пёрмаях çывăрас килни. Ытларах чухне В ушкăна кёрекен тата С витаминсем, фоли йÿçекё çитменнипе çын пусăрăнчăк çÿрет. Эмелсемсёр пуçне апат рационне пёлсе йёркелени те пулăшать. Хёвел çаврăнăш, ешёл çимёç, пăрça, ясмăк, лосось лайăх.

● Дыня кăна çисе çăмăл апат кунёсем йёркелемелле, çёрле тăпăрч çимелле.

● Чёрё купăста, пăрăç, кăшман çулçи, петрушка, кишёр, пан улми, вёсен сёткенёсем, ыхра, сельдерей, хăлха çакки курăкё хушса хатёрленё салатсем усăллă.

● Пăсăлма пуçланă, ытлашши пиçнё улма-çырлапа, пахча çимёçпе усă курма юрамасть. Кăмăл пусăрăнсан литипе пёр эрнерех сипленме пулать. Вёренё çур литр шыва çёрле 1 апат кашăкё сахăр ямалла, вăйсăр çулăм çине лартса ирёлтермелле, çунакан пирус кёлне çакăнта силлемелле. Ир енне унта лити пулать. Çур литр шёвеке яра куна сыпкăмăн-сыпкăмăн ёçсе ямалла.

Тип пыр шыççинчен

● Тасатнă сухана теркăпа хырмалла, хур çăвёпе хутăштармалла. Çак хутăшпа кăкăра, мăя сăтăрмалла, кăкăра ăшă япалапа çыхмалла. Хутăша ирсерен выç варла 1-ер апат кашăкё çимелле.

● Пёр пек виçепе кишёр сёткенё, сёт илсе хутăштармалла, кунне 5-6 хут ёçмелле.

● Кётмел /брусника/ сёткенёпе сёт хутăшё лайăх ÿсёрсе кăларма пулăшать.

● 2 апат кашăкё услам çава 2 çăмарта саррипе, 1 чей кашăкё çăнăхпа тата 2 чей кашăкё пылпа хутăштармалла. Кунне 3-5 хут апатчен 1-ер апат кашăкё çимелле.

● 1 пуç ыхрана вётетмелле, 1 стакан сёте ярса вёретмелле. Кунне темиçе хут 1-ер чей кашăкё ёçмелле.

Паха эмел вырăнёнче

Çёр улми паха эмел пулнине нумайăшё пёлмест те. Унăн чечекё те, туни те, улми те сиплё паха енсемпе палăраççё.

Чечекё. Шур эрехпе хутăштарнă шёвекё /настойка/ **радикулит чухне** пулăшать. Çав тери хытă ыратнă вăхăтра унпа ÿте сăтăрмалла, кунне 3 хутчен 1-ер апат кашăкё ёçмелле.

Миомăпа мастопати чухне те çёр улми чечекёпе сипленме сёнеççё. 1 чей кашăкё типётнё чечеке вёренё 1 стакан шыва ямалла. Кунне 3 хут стаканăн пёрре виççёмёш пайне ёçмелле. Çак шёвек юн пусăмне те йёркеллё виçене çитерет. Гипертони чирё вăраха кайсан çёр улми чечекён шёвекё çăлăнăç вырăнёнче.

Çёр улми чечекёпе **усал шыçăсенчен сипленнё чухне** те усă кураççё. 1 апат кашăкё чечеке термоса хумалла, вёренё çур литр шыв ярса 3 сехет тытмалла. Кунне 3 хут çуршар стакан ёçмелле.

● Çёр улми пёçерсен шывне тăкма кирлё мар. Ăна ёçсен ыратакан сыпăсене çăмăлрах, **шăмă хуçăлсан та** хăвăртрах сыпăнать.

Халăх медицини сёнет

Чёрене çăмăлрах килё

Чёре мышци шыçсан лимонпа инжир шёвекё пулăшать. 250 грамм лимон илмелле, вăррине кăлармалла, 150 грамм инжирпа пёрле аш арманёпе авăртмалла. 250 миллилитр пыл, 50 миллилитр шур эрех хушмалла. Шёвеке /настойкăна/ апат хыççăн 1-ер чей кашăкё ёçмелле.

● Шăлан çырлин настойки. Шăлана вётетмелле, çур литрлă кёленчене çурри ытла хумалла, шур эрехпе тултармалла. Тёттём вырăна 2 эрнелёхе лартмалла, кашни кунах силлесе илмелле. Сахăр песукё çине тумлатса 20-шер тумлам ёçмелле.

● Атеросклероз, гипертони чухне, ыйхă çётсен, чёре таппи пăсăлсан, пуç çаврăнсан катăркаспа прополисăн спиртри хутăшё усă кÿрет. Вёсене пёр пек виçепе илмелле. Кунне 3 хут апатчен çур сехет маларах 20-шер тумлам ёçмелле.

Çёнё хыпарсем

Пёлме интереслё

● Раççейре табак турттнинчен вакцина шухăшласа тупаççё. Вăл никотина пуç мимине лекме памё, çапла вара турттни çынна киленёç кÿме пăрахё.

● Америка кардиологёсен шухăшёпе – кофеинсăр кофе чёрепе юн тымарёсен чирёсене аталанма пулăшать. Эппин, ирсерен кофе ёçмеллех, çапах та яланхи пеккинех.

● Франци диетологёсем ытлашши виçерен хăтăлмалли мел шухăшласа тупнă. Кашни кунах 10-15 минут чёрне вёççён утмалла. Çакă кёлеткене тёрёс тытма та пулăшать.

● Франци ăсчахёсем хăйсен çулённен аслăрах курăнакан çынсен юн тытăмё урăхларах тесе çирёплетеççё. Арçынсен юнри хёрлё пёрчёсен /эритроцитсен/ виçи пысăкрах, хёрарăмсен эритроцит арканнипе пулакан билирубин ытларах.

● Кашни çын тенё пекех хăйёнпе хăй калаçать. Ку вăл ăсран тайăлма пуçланине пёлтермест. Пачах урăхла, психологсем пётёмлетнё тăрăх – çакă пуç мимине лайăх витём кÿрет.

● Тăруках пăлханса, хыпăнса ÿкни психика улшăнăвёпе пачах та çыхăнман – пёлтернё Япони ăсчахёсем. Ытларах чухне çакă организмра B_6 витамин тата тимёр çитменнипе çыхăннă.

Ангинăран

Ангина «çывхарса килнине» туйсанах çур лимон сёткенё хатёрлемелле, кăштах ăшăтмалла. Çак сёткенпе пыра чÿхемелле, çăтмалла мар. Çур сехетрен каллех çапла сипленмелле /час-часах чÿхесен пушшех те усăллă/. Тепёр куннех хăвăра çăмăлрах туйма пуçлатăр, 2-3 кунран чир çухалать.

Ангинăран сыхланас тёллевпе кашни кунах çывăрма выртас умён çăвара тăвар шывёпе /1 стакан шыва тăвара кăштах çеç хушмалла/ чÿхемелле.

Антонина СЕРГЕЕВА хатёрленё.

Ентешлёхсен спартакиадин сумё çÿллё шая çёкленчё

Çурла уйăхён варринче республикăри районсен ентешлёхёсен йăлана кёнё «Туслăх кубокне» çёнсе илессишён ирттернё ăмăртусенче хальхинче нихăçанхинчен те нумайрах спортсмен /пурё 21 команда/ тупăшрё. Шупашкар хула пуçлăхён Л.И.Черкесовăн хушăвёпе килёшÿллён пётёмёшле зачетра малти виçё вырăна йышăнакан командăри атлетсене хавхалантарма 230 пин тенкё уйăрнă.

Шупашкар хули 545 çул тултарнине халлланă XXII спартакиадăра чи малтан шывра ишекенсем ăмăртрёç. Икё хёрпе икё арçынран тăракан 2+2 эстафетăра пёрремёш вырăна Улатăр район ентешлёхён команди тухрё. Çак коллектив чысне Алтышево ялёнчи физкультурăпа сывлăх комплексён бассейнёнче ăсталăха туптанă ишевçёсем хÿтёлерёç. Вёсене йăлана кёнё спартакиадăна ЧР физкультурăпа спортăн тава тивёçлё ёçченё И.Григорьев хатёрленё.

Çивёч кёрешÿре 2-5-мёш вырăнсене йышăннă Хёрлё Чутай, Елчёк, Шупашкар тата Красноармейски районёсен ентешлёхёсен ишевçисем лайăх ăмăртнине те палăртма кăмăллă. Юлашки виçё вырăна вара Çёрпÿ, Комсомольски тата Куславкка районёсен командисем йышăнчёç.

Волейболистсен çивёч кёрешёвё «Спартак» физкультурăпа сывлăх комплексёнче пилёк куна тăсăлчё. Малтанхи тёл пулусенче икшер командăна çёнтерсе финала пёлтёрхи çёнтерÿçёсем – Вăрнарсем тата Муркашсемпе Тăвайсем – тухрёç. Татăклă тёл пулура выляма Вăрнарсемпе Тăвайсем тивёçрёç. Финалта Вăрнар районён ентешлёхён команди Тăвайсене 2:1 шутпа çёнтерчё. Çёнтерÿçё-командăри волейболистсене мала тухма ăнтăлма район администрацийён пуçлăхё Л.Николаев, хăй вăхăтёнче Вăрнар районёнче ёçлесе ырă ят-сум çёнсе илнё ЧР ял хуçалăх министрё С.Павлов тата ЧР Патшалăх Канашён Председателё Ю.Попов хавхалантарчёç.

Вăрнарсен командин чысне Вадим Кириллов /Пăртас ялёнчен/, Алексей Федоров /Уйкас Кипек/, Артем Степанов /Çёрпел/, Вячеслав Данилов /Çавалкасси/ тата Александр Ласкеев /Хурăн Кăкшăм/ уйрăмах лайăх хÿтёлерёç. Çёнтерÿçё командăна яваплă ăмăртусене сумлă ёçпе спорт ветеранёсем Геннадий Егоровпа Борис Макаров хатёрленё.

2010 çулччен мини-футбол турнирне вун икё командăран ытла хутшăнман. Республика тёп хулин 545 çулхи юбилейне халлланă спартакиадăра вара хăйсен ăсталăхне кашни районăн ентешлёхён футболисчёсем кăтартрёç. Çакăн пек ырă тёслёхе Чăваш Ен чемпионачёсенче те кураймăн. Малтанхи тёл пулусенче малти вырăнсене йышăнса спартакиадăн юлашки икё кунёнче Вăрмарсем, Етёрнесем, Елчёксем, Канашсем тата Патăрьелсем тупăшрёç. Çивёч кёрешÿре Юхма ен футболисчёсем пёр очко та илеймерёç, пиллёкмёш вырăна юлчёç. 3-4-мёш вырăнсемшён тупăшнă Елчёк тата Канаш ен ентешлёхёсен хушшинчи матч чи кăсăклисен шутне кёрсе юлчё. Елчёксем Канашсене 6:1 /!/ шутпа çёнтерсе бронза медале тивёçрёç. «Елчёк ен» командăшăн пуринчен те ăнăçлăрах Кармал ялёнче çуралса ÿснё, Шупашкарти «Лидер» строительство компанийён ертÿçи, ирёклё мелпе кёрешессипе тата регбол енёпе Раççей спорт мастерё Александр Лапшин вылярё. Вăл Канашсен хапхине икё мечёк тапса кёртрё. Çёршывёпе паллă атлет тăрăшнипе «Елчёк ен» команда вёрен туртассипе те виçёмёш вырăн йышăнчё.

Шупашкар районён команди вёрен туртассипе кăна пёрремёш вырăна тухрё. Ытти енпе халăх шучёпе пёрремёш вырăнта шутланакан район 4-8-мёш вырăнсене кăна йышăнчё. Апла пулин те комплексла зачетра пуринчен те сахал очко пухса пуçласа «Туслăх кубокне» тата спартакиадăна хутшăннă чи вăйлă атлетсене хавхалантарма уйăрнă 100000 тенкёлёх сертификата тивёçрё.

«Елчёк ен» командăн пётёмпе – 19, Канаш районён ентешлёхён 20 очко. Çапла майпа Елчёксемпе Канашсем иккёмёшпе виççёмёш вырăнсене пайларёç.

Шупашкар 545 çул тултарнине халлласа ирттернё спартакиадăна савăнăçлă самантра хупнă чухне спортсменсене уяв ячёпе Л.Черкесов, ЧР Патшалăх Канашён Председателё Ю.Попов, Чăваш наци конгресён ертÿçи, Шупашкар хулин хисеплё гражданинё Н.Угаслов тата ыттисем ăшшăн саламларёç.

■ **Петр СИДОРОВ,**
Шупашкар хула администрацийён сайтёнчен илнё сăн ÿкерчёксем

Ёçлев

«Конвертпа» – саккунсăр!

Шупашкарти Калинин районён прокуратури Кăнтăр пасарён территорийёнче ёçлекен предпринимательсем шалăва «конвертпа» тÿленин йышлă тёслёхне тăрă шыв çине кăларнă.

В.Головин, М.Кушмарова, А.Николаева, С.Волосникова, В.Митин предпринимательсем хăйсен патёнче сутуçăра ёçлекенсемпе ёç килёшёвёсем туманнине палăртнă. Ёçшён тÿлемелли вăрттăн схемăпа усă курни куç кёрет. Урăхла каласан предпринимательсем ёç укçин чăн виçине пытарнă, çавна май, паллă, налуксене, тёрлё фонда хывмалли тÿлевсенчен пăраннине тавçăрма йывăр мар. Тёрёслев кăтартăвёсене тёпе хурса район прокуратури ёçлев çинчен калакан саккунсене пăсни пирки административлă ёçсем пуçарнă. Çак материалсене тишкерсе Патшалăхăн ёçлев инспекцийё предпринимательсене 4-шар пин тенкёлёх штрафланă.

Район прокуратури çак ёçе малалла тăсё. Ытти районта та кёрёк арки йăваласа лармаççё. Тёп хулари Ленин районён прокурорён аслă пулăшуçи Ф.Кадырова ёçлевён вăрттăн рынокне легализацилемелли саккунсене пурнăçлассине çирёп сăнаса тăрас тёллевпе прокуратурăн «хёрÿ линийё» пысăк усă кÿни çинчен пёлтерчё. 62-25-51 телефонпа шăнкăравласа кашниех хăйён ёçпе çыхăннă прависене, ёçлев саккунёсене пăсни çинчен евитлеме пултарать – район прокуратури тивёçлё мерăсем йышăнё.

Палăртни вырăнлă: 2015 çулхи кăрлачăн 1-мёшёнчен ёç паракансен ёç килёшёвне кирлё пек çырманнипе çыхăннă яваплăхё çирёпленет. Кунашкаллишён должноçри çынсене – 10-20 пин, юридици вăйёнчи тытăм шутланман предпринимательсене – 5-10 пин, юридици вăйёнчисене 50-100 пин тенкёлёх штрафлассине çирёплетнё.

Унсăр пуçне налуксене, Пенси, Соцстрах, Обязательнăй медицина страхованийён фончёсене куçармалли страховани тÿлевёсене вăхăтра хывманшăн, çавăн пекех вёсене шутласа палăртмалли никёс виçине пёчёклетсе кăтартнăшăн тÿлемен налуксемпе страховани взносёсен 40% чухлё штраф санкцийёсемпе усă курма палăртнă. Штрафа татсан та ёç параканăн бюджета тата бюджет тулашёнчи фондсене хывмалли укçана пур пёр тÿлеме тивё.

■ **Н.КОНОВАЛОВ**

Тискерлёх

Усал та шелсёр

Уголовлă çак ёç материалёсемпе паллашсан чун çÿçенет. Çын тени мёнешкел усал та шелсёр пулма пултарать иккен…

Следстви комитечён Канашри пайё уголовлă ёçе тёпчесе пётернё ёнтё, ăна тишкерме суда ярса панă. Чăн та, хальлёхе айăплă çамрăксенчен пёри кăна суд умне тăрать.

Преступлени пёлтёрхи юпа уйăхён 19-мёшёнче каçхине пулнă. Икё каччă Канаш хёрринчи кану заведенийёнчен хула варрине лартса каятпăр тесе хёре улах вырăна илсе кайнă. Чёмпёр еннелле каякан автотрасса хёрринчи вăрман тăрăхёнче чарăннă. Хёре хывăнма хушнă.

Мёскён путсёрсенчен вёçерёнсе тарма пултарнă, çул çине чупса тухса груз турттаракан пысăк фурăна чарнă, кабинăна кёрсе ларнă. Анчах каччăсем грузовике хăваласа çитнё, çула пÿлсе ăна чарнă. Хёре кабинăран сётёрсе кăларнă. Çÿллё çёртен ÿкнё май унăн ури хуçăлнă. Çакă та ясар кăмăлпа авăрланнă çамрăксен хёрхенÿ туйăмне вăратайман. Йывăр сурланнăскере вёсем хăйсен машинине лартнă, вăрман тăрăхне каялла таврăннă. Каччăсенчен пёри /вăл ăçтине палăртманха – шыраççё/ хёре мăшкăланă.

Çакăн хыççăн ури ыратканскере, хăй тёллён утайманскере вырăнти больница патне илсе çитернё, асфальт çине пăрахса хăварнă, хăйсем тарнă. Хёр больницăн йышăну пÿлёмё патне шуса çитме пултарнă, юрать-ха, ăна васкавлă медпулăшу ёçченёсем асăрханă – шала илсе кёнё.

Канаш районёнчи Кивё Ахпÿрт ялён 23 çулти çамрăкё кёçех суд тенкелё çине ларё. Унпа пёрле преступлени тунă, хёре мăшкăланă юлташё тёлёшпе уголовлă ёç материалёсене тепёр производствăна уйăрнă. Пакунлисем ăна тупасси пирки иккёленмеççё. Паян мар тăк ыран çакланатех – тивёçлипе явап тытё.

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

«Шевле» – пултаруллисем валли

Çуллахи тапхăрта ачасен канăвне май пур таран усăллă йёркелес енёпе республика ертÿлёхё ырă пуçару чылай тăвать. Çурла уйăхён 14-мёшёнче Етёрне районён территорийёнче вырнаçнă «Ача-пăча канăвё» тулли мар яваплă обществăн базине çул çитмен çамрăксен черетлё ушкăнё килсе çитрё. Хальхинче – чăваш чёлхипе литературине, тăван ен культурине халлланă олимпиадăсемпе тёрлё ытти мероприяти çёнтерÿçисемпе призерёсен «Шевле» профсмени.

Паянхи кун çамрăк ăрăва чăваш халăхён культурипе, йăли-йёркипе паллаштарасси самаях çивёч ыйту шутланать: ара, тăван чёлхерен писекенсен йышё пысăклансах пырать. «Шевле» вара несёлсен пуянлăхне упрас-аталантарас тёллевлё. Кунта пулас журналистсем хăйсен калемне тёрёслесе пăхёç. Программăра чăваш тёррин, хореографин, наци апат-çимёçён ăсталăх класёсем пур. Авăн мёнле çапнине те хăшё-пёри кунта пуçласа курасси пирки пёртте иккёленместёп. Смена вёçлениччен хăйсен пурнăçри çулйёрне халех шыракансемпе республикăри театр артисчёсем те, çыравçăсемпе журналистсем те тёл пулма ёлкёрёç-ха. Лагерьти кунсем ачасемшён кăсăклă экскурсисемпе те асра юлёç.

■ **Влада МИРСКАЯ**

Садикренех спортпа туслашаççё

Юлашки вăхăтра республика ертÿлёхё спорт ыйтăвне уйрăмах пысăк тимлёх уйăрать. Çынна ачаранах сывă пурнăç йёркине пăхăнма хăнăхтармалла. Çакна асрах тытаççё Çёнё Шупашкарсем.

Çак кунсенче химиксен хулинче харăсах икё садикре спорт площадки уçăлнă. Вёсене ачапчана РусГидрон «Таса энерги» ыр кăмăллăх программипе килёшÿллён Шупашкар ГЭСё парнеленё.

16-мёш ача садёнче гидроэнергетиксен укçи-тенкипе спорт хулине хăтланă. Унта гимнастика комплексё, лабиринтсем, турниксем, баскетбол площадки тата ытти те пур. 10-мёш садик шăпăрланёсем физкультурăн çёнё комплексёнче сывлăха çирёплетёç, ятарлă вырăнта футболла тата баскетболла выляма, хитре беседкăра канма пултарёç. Çул çитмен ачасен çак учрежденисене 40 çул каялла хута янă, вёсене паян 500 яхăн ача çÿрет. Сăмах май, Шупашкар ГЭСё кăçал Çёнё Шупашкарти 7 садике спорт площадкипе савăнтарнă. 2011 çултанпа вара пурё 15 площадка хута янă.

С.РОЗОВА.

Тем те пёр

Эпё пытаратăп – эсир тупатăр

Сан-Франциско хулинче /АПШ/ тёлёнмелле миллионер пурăнать. Вăл хулара пытарнă укçа-тенкё çинчен пёрмаях пёлтерет. Ăна кирек кам та пырса илсе кайма пултарать. Услови пёрре: систерсе каланисене тёрёс пурнăçламалла. Пуян арçын социаллă сетьре хăйён страницинче ăçта пымалли çул-йёре палăртать. Телейлисем 100-е яхăн доллар тупаççё. Миллионер каланă тăрăх – çавнашкал ансат мелпе вăл çынсен хушшинчи танмарлăхпа кёрешет. «Эпё хам ёçлесе илекен укçан пёр пайне ыттисене парас терём, çапах та çак ёçе хаваслă тума тăрăшрăм», – тет.

Хăй кам пулнине пёлтермен арçынран тёслёх илекенсем те пур – Боулдер хулинче. Унта укçана пуçару ушкăнё пытарать, ăна мёнле тупмаллине вăлтса пёлтерет. Тупакансене 40 доллар /1400 яхăн тенкё/ хунă конверт кётет.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчё, 13-мёш çурт, 316-мёш пÿлём
ПЁЛТЕРÿ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района Чувашской Республики (организатор торгов) объявляет о проведении открытого аукциона по продаже права на заключение договора аренды земельного участка:

лот № 1 - земельный участок категории земель: земли сельскохозяйственного назначения, разрешенным использованием: для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 457700 кв.м., кадастровым номером 21:26:170301:147, местоположение: Чувашская Республика, Янтиковский район, Тюмеревское сельское поселение.

Начальный размер годовой арендной платы - 18400 рублей, шаг аукциона - 920 рублей, задаток - 3680 рублей, срок аренды - 15 лет.

Аукцион состоится 22 сентября 2014 г. в 14.00 часов по московскому времени в администрации Тюмеревского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Янтиковский район, д. Тюмерево, ул. Калинина, д.6.

Заявки на участие в аукционе принимаются в рабочие дни с 8.00 часов до 17.00 часов по московскому времени с 22 августа 2014 г. по 17 сентября 2014 г. в отделе экономики и имущественных отношений администрации Янтиковского района.

Задаток необходимо перечислить не позднее 17 сентября 2014 г на счет Управления Федерального казначейства по Чувашской Республики (Тюмеревское сельское поселение л/с 05153003540), ИНН 2121002574, КПП 212101001, р/с 40302810497063000034 в ГРКЦ НБ Чувашской Республики Банка России г. Чебоксары, БИК 049706001. Назначение платежа: "Обеспечение заявки на участие в аукционе по лоту № __". Внесенный победителем задаток засчитывается в счет стоимости предмета аукциона.

Победителем аукциона признается участник, предложивший наибольший размер арендной платы. Договор аренды земельного участка подлежит заключению не позднее 5 дней со дня подписания протокола аукциона.

С формой заявки и проектом договора аренды можно ознакомиться в администрации Тюмеревского сельского поселения и на сайте Тюмеревского сельского поселения Янтиковского района по адресу: **http://gov.cap.ru/Default.aspx?gov_id=548.** Для уточнения и получения дополнительной информации обращаться по телефону 8(83548)2-08-05.

Информация об итогах аукциона по продаже права на заключение договоров аренды земельных участков

Министерством имущественных и земельных отношений Чувашской Республики 18 августа 2014 года в соответствии с распоряжением Минимущества Чувашии от 30.06.2014 № 524-р проведен аукцион, открытый по составу участников и по форме подачи предложений о цене права на заключение договоров аренды 29 земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения, находящихся в государственной собственности Чувашской Республики.

По лотам 1-6, 8-11, 13-17, 20, 24 аукцион признан несостоявшимся ввиду наличия по данным лотам менее двух участников аукциона.

По лотам 7, 12, 18, 19, 21, 22, 23, 25, 26, 27 аукцион признан несостоявшимся ввиду отсутствия участников аукциона.

Победителем аукциона по лоту 28 (право на заключение договора аренды земельного участка общей площадью 44 004 кв.м с кадастровым номером - 21:09:310201:0032, местонахождение земельного участка: Чувашская Республика, Вурнарский район, пос. Вурнары, Вурнарский сельхозтехникум, вид разрешенного использования - для сельскохозяйственного производства) признан индивидуальный предприниматель Глава крестьянского (фермерского) хозяйства Фадеев Алексей Николаевич.

Победителем аукциона по лоту 29 (право на заключение договора аренды земельного участка общей площадью 1 417 958 кв.м с кадастровым номером - 21:09:310201:0036, местонахождение земельного участка: Чувашская Республика, Вурнарский район, пос. Вурнары, Вурнарский сельхозтехникум, вид разрешенного использования - для сельскохозяйственного производства) признано ООО "Агрохмель".

ПРОДАЮ

7. Срубы для бани. Т. 37-28-74.

62.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

чăваш халăх хаçачё
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечё, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчё" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийё
Федерацин ăсхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийёнче 2013 çулхи çу уйăхён 31-мёшёнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленё
"Хыпар" индексё – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тёп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторё Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тёп редактор çумё-коммерци директорё/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тёп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тёп редактор çумё/
С.Л.ПАВЛОВ /тёп редактор çумё/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайён редакторё/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрён пуçлăхё/
Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА

Редакцие издатель адресё: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчё, 13, Пичет çурчё, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонёсем:
56-00-67 – директор – тёп редактор
56-33-64 – тёп редактор çумё
56-04-17 – тёп редактор çумё
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçёпе политика пайё
56-05-21 – журналист тёпчевёсен тата куçару пайё
56-08-62 – экономика пайё
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вёренÿ пайё
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайё
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайё
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийё:
28-83-70 – рекламăпа пёлтерÿсен пайё
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайё
корр. пункчёсем:
8-937-398-75-33 – Хёрлё Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йёпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзён правленийё
Ёç кунё 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
hypar2008@rambler.ru
Çаçата «Хыпар» Издательство çурчё» АУ техника центрёнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийёнче пичетленё. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчё, 13. 56-00-23 – издательство директорё.
РЕКЛАМĂПА ПЁЛТЕРÿСЕНЕ 316-мёш пÿлёмре йышăнаççё. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечё. Калăпăшё 2 пичет листи. Рекламăпа пёлтерÿсен чăлăхёшён вёсене паракансем яваплă.
Çаçатри рекламăсăр тÿлевлё информаци материалёсем "Реклама çинчен" федераци саккунён 2 ст. килёшÿллён "Аталану çулёпе", "Ят-сум", "Ёç тата çын", "Самана таппи", "Компететлă" рубрикăсемпе пичетленеççё.
Номере 19.08.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минута алă пуснă.
Тираж 7411. Заказ 3087.